Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького
0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
ЙАНВАР
26
ЙУНКУН
20 (4833)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

20-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—57
Ред. заместителĕн 0—38
Редакци секретарĕн К—40
Дежурнăйĕн К—22

В. И. Ленин вилнĕренпе 14 çул çитнĕ тĕле Мускаври В. И. Ленинăн Центрти музейне çĕнĕ експонатсем тăратнă.
ÝКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: В. И. Ленинпа И. В. Сталин РСДРП Таммерфорсри (Финљанди) пĕрремĕш конференцийĕнче малтанхи хут тĕл пулни. Декабĕр, 1935 çул. И. А. Вацхвадзе художник картининчен.

Сойузфото репродукцийĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕсене чаплăн кĕтсе илни

Совет çĕршывĕнчи ĕççыннисем Мускавран таврăнакан ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕсене хаваслăн саламлаççĕ.

Славйанска (Украинă) транспортра стахановла йухăма пуçарса йана Петр Федорович Кривонос таврăннă. Праçник чухнехи пек илемлетнĕ вокзала заводсенчи, станцири, депори рабочисем тата районран килнĕ колхозниксем пухăннă.

— Çессинче пысăкран та пысăк государствăлă ыйтусене татса парса,—тенĕ митингра Кривонос йулташ,—эпĕр, депутатсем, хамăр халăхăн ывăл-хĕрĕсем пулса тăнине пĕр минутлăха та манман.

Çессин пур решенийĕсем те пирĕн тăван çĕршыва малашне татах чечекленсе пыма пулăшаççĕ, Совет çĕршывĕн хăватне татах та çирĕплетсе пыма пулăшаççĕ.

Одессăри вăтăр пин ытла ĕççыннисем хăйсен халăхсем шанса суйласа йанисене, ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕсене кĕтсе илнĕ. Кĕске митингра хумханулă сăмахпа Аслă Совет депутачĕ, Сойуз Совет Председателĕн заместителĕ академик-орденоносец Трофим Денисович Лысенко тухса каланă.

— ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çессийĕ,—тенĕ Лысенко йулташ,—çĕнĕ Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссариачĕ тума йышăнчĕ. Пирĕншĕн, ĕççыннисемшĕн, ку Халăх Комиссариачĕн тĕллевĕсемпе задачисем паллă. Пирĕн çар тата флот мĕн чухлĕ вăйлăрах та хăватлăрах пулать, çавăн чухлĕ пирĕн çĕршыв та вăйлăрах та хăватлăрах пулать, çапла тунипе епĕр социалисăм çĕршывĕ çине тапăнма пăхакан империалисăмла тискер кайăксен—фашисла бандитсен ĕмĕтне çапса çĕмĕретпĕр. (ТАСС).

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн депутачĕ О. Т. ХАРИТОНОВА—райĕçтăвком председателĕ

ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕ Ољга Тихоновна Харитонова йулташ йанварĕн 23-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Çессийĕнчен Патăрйелне таврăннă. Патăрйел районĕнчи ĕççыннисем хăйсен йуратнă депутатне пысăк хаваслăхпа кĕтсе илнĕ.

Харитонова йулташ Патăрйелне çитнĕ кун райĕçтăвком пленумĕ пынă. Пленумра Харитонова йулташ Аслă Советăн историлĕ пĕрремĕш Çессийĕн ĕçĕсем çинчен каласа панă.

Пленумра тухса калакан йалсовет, колхоз председателĕсем тата учителсем Аслă Советăн пĕрремĕш Çесси решенийĕсене тулли кăмăлпа ырланă. Советăн чăпчăн демократилĕ парламентне, Совет правителствине, пĕтĕм халăх суйланă депутата Сталин йулташа, унăн çывăх соратникĕсене хĕрӳллĕн саламланă. Хăйсен депутачĕн сăмахне пленум пысăк хаваслăхпа итленĕ.

Çак пленумра пĕр сасăпах Ољга Тихоновна Харитонова йулташа Патăрйел райĕçтăвкомĕн председателне суйланă.

Районри ĕççыннисем Харитонова йулташа райĕçтăвком председателне суйлани çинчен пĕлтернĕ хыпара пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илнĕ.

Тракторсене йусасси

Йанварĕн 20-мĕшне машинă-тракторлă станцисем 98.840 трактор йусанă, ку вăл государствă планне 40 процент тултарни пулать. Йулашки пилĕккунлăхра 14.812 трактор йусанă, йанварĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 15-мĕшчен 10.181 трактор йусанă пулнă. Иртнĕ çулта йанварĕн 20-мĕшне тракторсене йусас плана 55 процент тултарнă пулнă. Ку цифрăсенчен выранти оргăнсем, машинă-тракторлă станцисем тата мастерскойсем татăклă улшăну тăвайманни курăнать.

Тракторсене йусас ĕç уйрăмăнах кăнтăрти районсенче йулса пырать.

ПСК(б)П Тĕпкомĕпе ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Çуракине хатĕрленесси мĕнле пыни çинчен“ йышăннă постановленинче кăтартнă çитменлĕхсене пур çĕрте те пĕтермен-ха. Ремонт мастерскойĕсене пит те хуллен йĕркене кӳреççĕ. Курск облăçĕнчи Фатежск МТС-нчи мастерскойра вут хутмаççĕ, çутă çук, 50 рабочи ĕçлес вырăнне 20 çеç ĕçлеççĕ. Ку МТС-ра хĕл каçипе те ни райĕçтăвком председателĕ, ни районри парти организацин руководителĕсем пулман.

Хăшпĕр МТС-сем социалисăмла ăмăртса ĕçлес вырăнне парадри пек шавласа иртереççĕ. Сейтлерск тата Зуйск (Крым) МТС-сем йанварĕн 15-мĕшне йусаса пĕтерме пулнă, анчах та ку МТС-сен руководителĕсем рабочисене организацилĕ-техникăлă условисем туса паман, çавна пула ремонт планне çуррине çеç пурнăçа кĕртнĕ. Ново-Покровск (Ростов облăçĕ) МТС-нчи малта пыракан рабочисем социалисăмлă ăмăрту пуçарса йанă, анчах та вĕсен пуçарувне руководителсем пулăшман.

Ĕç—вырăнти руководителсенче. Вĕсен МТС-нчи рабочисен хăпарса пыракан социалисăмлă ăмăртуне йертсе пымала тата стахановла йухăма бољшевикла организацилемеле. (ТАСС).

Сталинский чукунçул çинчи кривоносовецсен паха ĕçĕ

Сталинский чукунçулĕн малта пыракан Мелитопољ отделенинчи стахановец-кривоносовецсем, ССР Сойуз Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çессçи йачĕпе, вагонсем тийемели уйăх планне срукчен тултарнă. Мелитополецсем нормă тăрăх 130 вагон тийес вырăнне кашни талăкрах вăтамран 213 вагон тийесе йанă. Йанварĕн 20-мĕшĕнче тийесе йамали талăк планне 256 процент тултарнă. (ТАСС).

Йутçĕршывсенче Ленин кунĕсене иртерни

БАРСЕЛОНА, йанварĕн 24-мĕш (ТАСС). Испани компартин „Френте Рохо“ хаçачĕ ĕнерхи номĕрте Ленин вилни 14 çул тултарни çинчен çырнă. Умстатйара хаçат çапла çырать:

„Пролетариатăн генилĕрен те генилĕ çулпуçĕ Ленин хушса хăварнисене унăн соратникĕ Сталин пурнăçа кĕртрĕ. Вунтăватă çул иртрĕ, социалисăм строителствин ĕçĕ мĕн пур фронтсенче çĕнтерчĕ. ССР Сойузĕ тĕнчере халиччен пулман демократи туса хучĕ, вăл демократине Сталинла Конституцире çирĕплетнĕ, ССР Сойузĕ халљ коммунисăмлă обшествă туса çитересси патне пырать. Совет Сойузĕнчи национаљнăçсем телейлĕ, совет рабочийĕсем, хресченĕсем, çамрăкĕсем телейлĕ. ССР Сойузĕ пĕтĕм тĕнчери ĕççынисен майакĕпе никам аркатайми чулту пулса тăрать, вăл чулту çумне пырса çапăнсан фашисăм арканса кайать. Мĕлйун-мĕлйун ĕççыннисем совет йалавĕ çине хумханулăн пăхаççĕ. Испани ССР Сойузĕпе тăван пек пĕр шухăшлă пулнине мухтать. Испани халăхĕ Ленина вăл тунă ĕçсем тăрăх, Коминтерн малала илсе пыракан тата Сталинпа ПСК(б)П çĕнтерӳлĕн пурнăçа кĕртсе пыракан ĕç тăрăх астăвать“.

* * *

ВЕНА, йанварĕн 24-мĕш (ТАСС). Базелрен (Швейцари) пĕлтернĕ тăрăх, Ленин вилни 14 çул çитнĕ май компартин выранти организацийĕ организацилениле унта траурлă митинг пулса иртнĕ, митингра 1.200 ĕççынни пулнă. Митинга пухăннисем çавăн пекех Карл Либкнехтпа Розă Љуксембурга та асăннă. Лару залне Ленин, Либкнехт тата Розă Љуксембург портречĕсемпе, çавăн пекех хĕрлĕ йалавсемпе илемлетнĕ. Митинг пĕтнĕ хыççăн, митинга пынă партире тăман çынсем хăйсене коммунисла партине илме пит нумай зайавленисем панă.

Совет Сойузĕ тăрăх

★ Ростов облăçĕнчи колхозсенче халљхи вăхăтра 176 кирпĕч завочĕ, 30 черепицă завочĕ тата 25 извĕç завочĕ ĕçлесе тăраççĕ. 1938 çулта 38 районта çĕнĕрен çĕре йахăн кирпĕч завочĕсем, 50 черепицă завочĕ тата 33 извĕç завочĕ тăваççĕ.

★ Краснодар крайĕнчи колхозсенче 1.636 клуб тата 586 кинотеатр пур, вăл кино-театрсенчен 98-шĕ саслă кино-театрсем. Мĕлйун тенкĕ таран укçа-тенкĕ тытакан колхозсенчен нумайĕшĕсем хăйсене валљи чăн-чăн кулљтурă дворецĕсем тăваççĕ, ку дворецсем хуларисенчен пĕртте кайа мар.

★ Хура тинĕс çыранĕнче тата пĕтĕм Абхазире калама çук ăшă хĕл тăрать. Гагрта тата Сухумире сурхи чечексем нумай тухнă, розăсем чечеке ларнă. (ТАСС).

Испанири фронтсенче

Теруел патĕнче вăйлă çапăçусем йанварĕн 23-мĕшĕнче те пулса иртнĕ, анчах ку çапăçусем малтанхи кунсенчи пек мар, кăшт вăйсăртарах пулнă. Фашиссен атакисене пурне те сирсе пăрахнă. Республикă авиацийĕ фашиссен позицийĕсем çине бомбăсем пăрахса вăйлăн тапăннă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăнусемех те çук.

Фашисла авиаци мирлĕ хуласем çине бомбăсем пăрахнине тата граждăнла халăха вĕлернине ответлесе, республикăн 10 самољочĕ йанварĕн 23-мĕшĕнче ирхине Севилйери çар обйекчĕсем çине 5 тоннă бомбăсем пăрахса тапăннă. (ТАСС).

Пăлхавçăсен авиацийĕ иртĕнсе кайнă

Париж, 24. Гавас агенгстви пăлхавçăсем Испанири тĕрлĕ вырăнсене бомбăсем пăрахни çав вырăнсенче Англи парламентарийĕсем-лейбориссем пырса çӳренĕ вăхăтпа пĕр тĕлте пулса иртни çинчен паллă тăвать. Лейбориссен делегацийĕ Мадрида пынă вăхăтра пăлхавçăсем делегаци чарăннă вырăна икĕ хутчен пенĕ. Йанварĕн 22-мĕшĕнче пăлхавçăсен самољочĕсем Валенси çине бомбăсем пăрахнă, çав вăхăтра унта лейбориссен делегацийĕ пулмала пулнă. Анчах та делегаци пăлхавçăсен самољочĕсем бомбăсем пăрахаччен темиçе сехет малтан Таррагона Англи морйакĕсене пытарма тухса кайнă пулнă. Вăл морйаксем пăлхавçăсен авиацийĕ Англин „Торпенесс“ йатлă парохочĕ çине бомбăсем пăрахнипе вилнĕ.

Йанварĕн 23-мĕшĕнче пăлхавçăсем бомбăсем пăрахма Испанийе Франципе пĕрлештерекен чукунçула суйласа илнĕ. Вăл çулпа депутатсем Пуигсерд хулине каймала пулнă мĕн. Анчах та депутатсем ку чухне те пăлхавçăсен самољочĕсем пырса тапăниччен темиçе сехет малтан тухса кайнă пулнă. (ТАСС).

Пăлхавçăсем Франци территори çине бомбăсем пăрахнă

ПАРИЖ, 24. (ТАСС) Гавас агенстви пĕлерне тăрăх, Испанири пăлхавçăсем Франци територийĕ çине бомбăсем пăрахнă пирки, Пиреней префекчĕ Франци правителствине мирлă халăха сыхлама кирлĕ мерăсем йышăнма чĕнсе каланă. Префект Испани чики çывăхне самољотсен ескадрилйине вырнаçтарма тата чикĕ тăрăх зенитлă артиллери тăратма ыйтать.

Йапонецсем Нанкина ишĕлтереççĕ

ЛОНДОН, 23. (ТАСС). Рейтер агенствин Гонконгри корреспонденчĕ çырнă тăрăх, йапонецсем Нанкин хулине тата унăн тавра шĕнчи вырăнсене çĕмĕрме халĕ те чарăнмаççĕ. Акă ĕнтĕ,—тесе çырать корреспондент,—йапонецсем хулана 39 кун хушши хăйсен аллинче тытса тăраççĕ, а хулан пысăк пайне çулăм çавăрса илнĕ. Анатри хула тата суту-илӳ кварталĕсем ишĕлчĕксен купи пулса йулнă, унта выçăпа вилме патне çитнĕ йытăсем çеç утса çӳреççĕ. Хула çаралнă. Китай çыннисем хуларан тухса тарнă, пĕр беженцăсем пурăнакан вырăнта кăна тĕмиçе китайец сыхланса тăраççĕ. Çав вырăнта кăна пурнăç тытăнса тăрать, мĕншĕн тесен кунта китайецсем урăх çĕршыв çыннисем организациленĕ беженцăсен ĕçĕсен комитечĕн хӳтлĕхĕнче пурăнаççĕ.

Красноармейецсем шпион тытнă

Йанварĕн 20-мĕшĕнче çурçĕр иртсен пĕр сехетре, Владивостокра Н-ски чаçри красноармейец Миниханов йулташ обходлă çул çинче дежурнăйра тăнă чухне, кĕпер айĕнче пыракан пĕр йут çынна асăрханă. Миниханов ăна сăмах хушнă. Çав паллă мар çын, хирĕç нимĕн те чĕнмесĕр, тарма пикеннĕ. Миниханов йулташ тепĕр красноармейецпа, Агейев йулташпа пĕрле паллă мар çынна 3 километр ытла хăваласа кайнă. Тытнă етем пĕр йутçĕршыв державин шпионĕ пулнă мĕн. (ТАСС).

Францири çĕнĕ правителствă

Йанварĕн 18-мĕшĕнче Францире Шотан председател пулса йертсе пыракан çĕнĕ правителствă туса хунă.

Шотан правителстви отставкăна тухнăччĕ. Правителствă пилĕк кун хушши кризисра пулнă хыççăн Шотан влаçа çĕнĕрен таврăннă, анчах урăх составлă правителствăпа. Шотанăн малтанхи правителстви, влаçра 1937 çулхи июнь уйăхĕнчен пуçласа 1938 çулхи йанварĕн 14-мĕшĕччен тăнăскер, радикал-социалиссенчен тата социалиссенчен тăнă. Халљхи правителствăна радикал-социалиссенчен тата парламентăн халăх фронтне кĕрекен хăшпĕр пĕчĕк ушкăнĕсенчен тунă. Çиелтен пăхсан правителствăна малтанхи пекех халăх фронтĕнче тăракан çынсенчен тунă темеле, анчах ĕçре вăл сылтăмала кайни палăрать.

Шотанăн малтанхи правителствине—вăл халăх фрончĕн политикине çирĕп пурнăçа кĕртмест, тесе тĕрĕсех сăмах тĕкнĕ. Çакна каласан та çитĕ: рабочи клас кĕрешсе илни çине, уйрăмăн илсен, 40 сехетлĕ ĕç эрни кĕрешсе илни çине Франци капиталĕ тапăннă вăхăтра правителствă рабочисен интересĕсене хӳтлес тесе çирĕп тăман. Парижре тата çĕршывăн ытти центрĕсенче пулнă чылай забастовкăсенче правителствă штрейкбрехерсене хавхалантарнă, йе хăшпĕр чухне тата, сăмахран, Парижри коммунаљниксен забостовки вăхăтĕнче, забастовкăна чарса лартма çар чаçĕсем йарассипе хăратнă. Германипе Итали фашисăмĕ çĕршыва сĕмсĕрленсе кĕрсе ирсĕр ĕçсем тунипе,—вĕсене Францире фашисла заговор тупса палăртнă май пырас тунă,—правителствă татăклăн кĕрешмен. Нумай хĕçпăшал склачĕсем тунă тата правителствă аллинче, паллах, фашисла заговорсен пысăк планĕсем пулнă пулин те, ку ĕç пирки следстви питĕ вăрахăн туса пынă, заговора чăн-чăн хавхалантаракансем тата организаторсем, фашисла сутăнчăксем—Доррио, Де Ља Рок тата ыттисем те халĕ те ирĕкрех йулаççĕ.

Шотан правителстви çĕршыв тулашĕнчи политикă ыйтувĕпе Англи консерваторĕсен хӳринче çапкаланса пынă. Уйрăмăн илсен, Испани ыйтувĕнче Франко генерала пур майпа та пулăшас çулйĕр çине тăнă.

Çĕршыв тулашĕнчи политикăра пĕрмайах унтала-кунтала чӳхенсе тăни—Балканра тата кăнтăр-хĕвелтухăç Йевропăра Германи фашисăмĕ валљи çул уçса панă.

Шотан правителстви халăх фрончĕн политикинчен çакăн пек чакнин,—Францири коммунисла парти куç пирки пĕр хут мар кăтартса панă,—хăйĕн сăлтавĕсем пулнă. Вăл влаçра тăракан радикал-социалиссем, уйрăмăнах çав партин сылтăм ушкăнĕ, халăх фронтне салатса йама тăрăшакан шултра капитал хĕсни тăрăх ĕçлесе пынинчен килнĕ.

Кризис вăхăтĕнче коммунисла парти халăх фрончĕн правителствине, урăхла каласан, радикал-социалиссем, социалиссем тата коммунисcем кĕрекен правителствă тума ыйтнă.

Кун пек правителствă тума май килмен. Куншăн сылтăм радикалсем тата Францири социалиссен партин хăшпĕр лидерĕсем айăплă.

Франци реакцилĕ хаçачĕсем влаçа çĕнĕ правителствă ларнипе халăх фрончĕ саланса кайасса шанаççĕ. Анчах та, реакци халăх фрончĕ саланса кайасси çинчен ĕмĕтленме иртерех-ха.

Правителствă кризисĕ вăхăтĕнче тата ун хыççăн та ĕççынни массисем Францин мĕн пур кĕтесĕсенче халăх фронтне пĕтĕçтерессишĕн демонстрацилене.

Халăх фронтне хавхалантарса организацилесе пыракан Францири коммунисла партин ролĕпе влийанийĕ нихăçанхи пек те мар ӳсрĕ. Ку вăл Францин халăх фрончĕ çирĕпленессине тата халăх фрончĕ çине атакăлани малтанхи пекех саланса кайассине пĕлтерет. (ТАСС).

Франци правителствин декларацийĕ

Йанварĕн 21-мĕшĕнче Франци парламентĕнче Шотан пуçпулса йертсе пыракан çĕнĕ правителствăн декларацине (зайавленине) вуласа панă.

Декларацинче: рабочи класăн саккунлă йĕркепе тунă социаллă çĕнсе илнисем çине алă çĕклеме правителствă никама та ирĕк памĕ, вĕсене пурнăçа кĕртĕ, тесе каланă.

Шотан каласа панă тăрăх, йанварĕн 26 мĕшĕнче правителствă предприйати хуçисемпе рабочисем хушшинчи хутшăнусем çинчен парламента саккун пройекчĕ тăратать.

Парламентăн çав ларувĕнчех Шотан—хресченсене уçă тăвас тĕлĕшпе правителствă чылай ĕçсем туса иртерет, тесе пĕлтернĕ. Нимĕн иккĕленмели те çук,—тенĕ Шотан, Франци правителстви пурнăçа кĕртсе пыракан политикă вăл—халăх фрончĕн политики пулать.

Депутатсен палати Шотан декларацине итленĕ хыççăн, сасăсен ытларахăшĕпе (501 сасă, 1 сасă хирĕç пулнă, сылтăм партисен представителĕсем сасăламасăр тăнă) Шотан правителствине шаннине палăртнă.

Правителствă декларацине ырланă парламент ларувĕн итогĕсем çинчен пĕтĕм Франци пичечĕ чĕррĕн сӳтсе-йавать.

Фашисла тата сылтăм пичетĕн пĕр пайĕ сасăланин резуљтачĕсем пирки тарăхса кӳреннĕ. Темиçе кун кайала çеç—халăх фрончĕ ишĕлсе аннă тата арканса кайнă, тесе çирĕплетекен хаçатсем сасăланин резуљтачĕсем хыççăн уççăнах аптраса кайнă.

Франци компартин хаçачĕ „Йуманите“, реакци халăх фронтне аркатма хăтланни ăнăçлă пулмарĕ тата „халăх фрончĕ пĕрлĕхлĕ пулса йулать“ тесе çырать. (ТАСС).

Китайри вăрçă

Вăтам Китайра

ЛОНДОН, йанварĕн 24 мĕш. (ТАСС). „Дейли телеграф энд морнинг пост“ хаçатăн Бейпинри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Танљцзин—Пукоу чукунçулĕн кăнтăр участкинчи секторĕнче Мингуан районĕнче хайар çапăçусем пулса иртеççĕ. Китай çарĕсем йапонецсене хирĕç татăклăн çапăçаççĕ. Çанталăк начар пулни малти позицисенче çапăçакан çарсем валљи апат-çимĕç тата вăрçă хатĕрĕсем илсе пыма чăрмантарать. Йапони авиацийĕ Китай çарĕсен позицийĕсем çине бомбăсем пăрахса вăйлăн тапăнать.

Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, çапăçу пыракан районра Китай çарĕсем йуханшыв урлă хывнă кĕпере сиктерсе çĕмĕрнĕ, çакăн хыççăн вара йапонецсен хăйсен артиллерине йуханшыв урлă пăр çийĕпе каçарма тивнĕ. Каçнă чухне пăр çурăлса кайнă та, Йапонин пит нумай орудийĕсем шыва путнă.

ШАНХАЙ, йанварĕн 24-мĕш. (ТАСС). Китайри партизан отрйачĕсем йапони çарĕсен тылĕнче халь те активлăн çапăçаççĕ. Нанкин—Шанхай чукунçул тăрăхĕнче партизансем час-часах йапони чаçĕсем çине тапăнаççĕ. Çакна май йапони командованийĕ çав çул тăрăхĕнчи çарсене пулăшма Шанхайран çарсем йанă.

„Чайна пресс“ хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Шанхайран Хĕвелтухăç йенчи районăн пысăк территорине Китай партизанĕсем йышăнса илнĕ. Çак районти Йапони гарнизонĕсем çине партизансем час-часах пырса тапăнаççĕ. Йулашки кунсенче Ченцзйахан çине (Шанхайран хĕвеланăçнеле 15 километрта) темиçе хутчен те сасартăк пырса атакă тунă. Çавăн пекех тата Шанхайран 20 километра йахăн кăнтăр-хĕвеланăçнеле Йапони çарĕсемпе партизансем хушшинче çапăçу пулса иртнĕ. Хаçат кăтартса панă тăрăх, Йапонин пит нумай салтакĕсене çар хатĕрĕсемпе тата орудисемпе пĕрле Шанхайран хĕвеланăçпе хĕвелтухăç йенеле, партизансемпе кĕрешекен çарсене пулăшма йанă.

Çурçĕр Китайра

ЧУНЦИН, йанварĕн 24-мĕш. (ТАСС). Танљцзин—Пукоу чукунçулĕн çурçĕр участкинче Ланљсалйанљ хулине (Шанљдун провинцинче, Йанчжоуран кăнтăрала) Китай çарĕсем йапонецсенчен кайала туртса илнĕ. Йанчжоуран кăнтăр-хĕвелтухăçнерех выракан Фейсан çине Йапони çарĕсем атакă тунине Китай çарĕсем сирсе пăрахнă.

ЛИНФЫНЉРЕН (Шанљси провинцийĕ) пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ ернере Де Ван кнљаçĕн икĕ монгол полкĕ восстани туса Китай çарĕсем йенне куçнă, вăл полксенчен халь çĕнĕ çар чаçĕ тунă, ăна ĕнер Китай çарĕсемпе пĕрле тăрса çапăçма фронта йанă.

Кăнтăр Китайра

ЧУНЦИН, йанварĕн 24-мĕш. (ТАСС). Свабу тата Сватоу çывăхне (Кăнтăр Китай çыранĕ) Йапонин икĕ крейсерĕпе икĕ канонерки пынă.

Аслă Совет депутачĕ йертсе пыракан колхозра

ЙЕТĔРНЕ, йанварĕн 25-мĕшĕ. (Хамăр корр. телефон тăрăх). ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн депутачĕ, орденоносец А. М. Краснов йулташ председател пулса ĕçлекен Тури-Ачакри „Крестьянская газета“ колхозра пурнăç хавасланхпа тулнă. Кунти колхозниксем кашни кунах çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнӳсем туса пыраççĕ. Пуйан та културăлă пурнăçшăн хĕрӳлĕн кĕрешеççĕ.

Çуракине бољшевикла хатĕрленсе вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешесси—кунран кунах вăйланса пырат. Колхозниксем, хăйсем пĕтĕм чĕререн йуратакан Аслă Совет депутатне А. М Краснов йулташа Мускава пĕррмĕш историлĕ Çессине ăсатнă кун, кашни гектартан вăтам шутпа 35 центнертен кайа мар тĕштырă туса илме обйазателства илнĕ. Йажейкин йулташ йертсе пыракан стахановла бригадă кашни гектартанах 45 центнертен кайа мар тĕштырă туса илме сăмах панă.

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Çессийĕ уçăлнă кун, кăçалхи ĕççен агротехникă планне йышăннă. Халĕ вĕсем çав планра кăтартнă ĕçсене пурнăça кĕртсе пыраççĕ. Вăрлăхсене суртланă, йалхуçалăх машинисене йусанă Йанварĕн 15-мĕшпе 20-мĕш хушшинче 1300 лав йушкăн, 240 лав торф, 142 лав тислĕк т. ыт. пухнă. Колхозниксем тата бригадăсем ăмăртса ĕçлеççĕ. Колхоз Пољанкăри „Киров“ колхозпа ăмăртса ĕçлет. А. М. Краснов йулташ ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Çессинчен таврăнчĕ. Ăна колхозниксем пысăк хастарлăхпа кĕтсе илчĕç. Пысăк, нумай çынлă пуху пулса иртрĕ. Пухура А. М. Краснов йулташ ССР Сойуз Аслă Совечĕн пĕррмĕш историлĕ Çессин ĕçĕсем çинчен калса пачĕ.

—Ĕççынинсем мана депутата суйларĕç. Епĕ вĕсене, хамăн суйлавçăсене, шантаратăп. Ленин—Сталин парти ĕçне пĕтĕм чĕререн йуратса пурнăça кĕртсе пыратăп, пуйан та културăлă, савăнăçлă та телейлĕ пурнăçшăн пĕтĕм вăйа, хамăн мĕн пур пек пултарулăхпа, хастарлăхпа ĕçлеме пулатăп,—терĕ А. М. Краснов йулташ.

Н. Пушкин.

Çуракине хатĕрленме васкамаççĕ

ЙĔПРЕÇ (хамăр корр.). Уйхир стахановецсемпе ударниксен тата бригадирсен районри канашлăвĕнче кăçал районри колхозсем умне гектартан вăтампа 100 пăтран кайа мар тĕштырă туса илес задачă лартнă. Çак задачăна пурнăçлас йайпа колхозсен нихçанхинчен вайлăрах ĕçлемеле. Çере çемçетмели имçамсене: торф, тислĕк туртармала, фосфорит, кали çăнăхĕсене кӳрсе хатĕрлемеле, вăрлăхсене тасатмала, улăштармала, йалхуçалăх машинисене йуçаса çитермеле. Çак асăннă ĕçсене йанвар уйăхĕнче туса çитермеле.

Анчах та Йĕпреç районĕнчи чылай колхозсем пайанхи куна çитсе те çуракине хатĕрленес ĕçе тимлĕн тытăнман. Акă „Ударник“, „Красный партизан“ колхозсенче йалхуçалăх машинисене йусас, вăрлăх фончĕсем уйăрас, суртлас, суртлă вăрлăхсене улăштарас ĕçсем сӳрĕккĕн пулса пыраççĕ. „Ударник“ колхозра йалхуçалăх машинисене йусас ĕçе ах клмаççĕ. Колхозра çураки вăхăтĕнче 16 икĕ каслă плугсем ĕçлемеле, вĕсенчен нихăшĕ те йусавла мар. Трийера та усăсăрах лартаççĕ. Вăрлăхлăх уйăрнă тырăсене тасатма тытăнман. План тăрăх колхозăн 40 центнер фосфорит çăнăхĕ кӳрсе хатĕрлемеле, уйа 1500 лав тислĕк кăлармала, кĕл 200 центнер пухмала. Ку ĕçсене те колхоз пурнăçласа пымаст.

„Красная партизан“ колхоз çуракинче акма вăрлăх çителĕклех уйăрнă. Анчах вăрлăхсене суртлас ĕçе тытăнман. Йанварĕн 17-мешне колхоз 800 лав торф, 660 лав тислĕк кăларнă та лăпланнă.

„Красная Нива“ колхозăн 50 центнер тулă вăрлăхĕ çитмест. Анисимов бригадир „улăштарма кайма килсе чĕнесçе“ кĕтет. Çавăн пекех клевер вăрлăхĕ те çитмест. Вăрлăхсене нихăш културă тăрах та тасатма тытăнман. Колхозăн пĕр сортировка пур, анчах вăл та пулин йусавсăр. 3 плугăн тимрине хывтармала, сӳресен туртисем çитмеççĕ, лаша таврашсем—сӳсмен, ĕнерчĕксем нумайĕшĕ кӳлме йурăхсăр, вĕсене йусаман. Ĕç лашисене конюхсем йапăх пăхаççĕ. Хума выран çук тесе колхозниксем кĕл пухмаççĕ, кайăк кĕ пĕк т. ыт тислĕксене пухса хатĕрлес йенĕпе ĕçлемеççĕ. 420 лав тислĕкпе 201 лав торф кăларнисĕр пуçне колхоз урăх ĕçсене туман.

„Чувашия“ колхозра çуракине хатĕрленес ĕç йапăх. Вăрлăхсем çитмеççĕ, пур пек вăрлăха та суртлама тытăнман. Çерĕç пайĕн планĕ тăрăх колхозăн 160 центнер тулă вăрлăхне „Двигатель революции“ колхозпа улăштармала пулнă. Анчах „Двигатель революции“ колхозăн тула вăрлахĕ хăйĕн те акма йурăхсăр. Йалхуçалăх машинисем йусавсăр, йур айĕнчех выртаççĕ. Çĕре çемçетмели имçамсене кӳрсе хатĕрлессипе те колхоз вырăнтан тапранман. Йур тытас ĕçе асăннă колхозсенчен нихăшĕ те тытăнман, агрокружоксем ĕçлемеççĕ.

Çуракине хатĕрленес ĕç йединоличниксем хушшинче тата та йапăхрах пырат. Йединоличниксем шучĕ пысăк. Çĕнĕ Чурашра 69 хуçалăх, Анаткасра—86, Сиреклейре 61 хуçалăх шутланат. Вĕсен лашисем начар, чылайĕшĕн çуракинче акма вăрлăхсем çитмеççĕ. Вăрлăхлăх тырра пайанччен те пухса пĕр амбара хывман, вăрлăхсене тасатас ĕçе тытăнман.

Райçĕрĕç пайĕн колхозсене йертсе пырассине вăйлатмала. Пур колхозниксемпе йединоличниксене те кăçал иртнĕ çулхинчен ытларах тырпул туса илессишĕн кĕрешес ĕçе организацилемеле.

Мих. Йаковлев.

ĔНЕСЕР КОЛХОЗНИКСЕМ ÇУК

Çĕнйал-Уйкас йалсоветне кĕрекен „Араслан“ колхозра (Шупашкар р.) ĕнесĕр колхозниксем çук. Иртнĕ çулсенче Семен Андрейевăн, Николай Смирновăн, Лука Василйевăн ĕнесем пулман. Вĕсене колхоз ĕне туйанма укçа парса пулăшрĕ. Халĕ колхозра ĕнесĕр колхозниксем пĕре те çук.

Т. Л.

Йалсоветсен ответлă ĕçĕ

Ишлей районĕнче чылай йалсоветсем çуракине йапăх хатĕрленеççĕ. Ку вăл чи малтан райĕçтăвкомран килет. Райĕçтăвком президиумĕ çуракине хатĕрленес ĕçе тивĕçлипе хакламаст. Вăл çак тĕслехрен те аван курăнат: райĕçтăвком президиумĕ ку тарана çитсе çуракине хатĕрленес ыйту тăрăх икĕ йалсовет председателĕн докладне çеç итлене. Райĕçтăвкома кура йалсовечĕсем те чылайĕшсем колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслес майпа президиум ларăвĕнче колхоз председателĕсен доклачĕсене итлемеççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах Хăймалакассипе Ишлей йалсовечĕсем начар ĕçлеççĕ. Райçĕрĕçпай пуçлăхĕ Йиргейев тата райçĕрĕçпайĕнче ĕçлекен агрономсемпе зоотехниксем çуракине хатĕрленес ĕçре колхозсене сахал пулăшаççĕ, вăхăта пуринчен ытла канцељаринче ларса иртереççĕ.

Районра çуракине хатĕрленес ĕç йапăх пыни çак тĕслĕхсенчен аван курăнат. Районра пурĕ 8 трийер. Йанварĕн 17-мĕш тĕлне вăрлăха трийер витĕр кăларас плана мĕн пурĕ те 24 процент кăна пурнăçланă „Хăймала“, „Аврора“, тата ытти колхозсенче вăрлăха типтерлĕ тытмаççĕ, ку тарана çитсе те вăрлăха ша арса пăхман. Районра суртлăх вăрлăхсене улăштарса илес плана мĕн пурĕ те 5 проц. çеç тултарнă. Клевер, кантăр вăррисем плана кăтартнă чухлĕ акма çитмеççĕ.

Çавăн пекех çĕре çемçетмели имçамсем, тислĕк хатĕрлесси те питех те йапăх. Тислĕк туртарас плана 27 проц. кăна тултарнă. Çере çемçетмели имçамсене, кел, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, торф таврашсене хатĕрлеме тытăннă çеç. Ишлей колхозĕ фекали хатĕрлеме тăрăшманнине кура, Ишлейри фекалине ытти колхозсем 7—8 çухрăмран килсе кӳрсе кайаççĕ.

Район йалхуçалăх машинĕсене йусас тĕлĕшпе те кайа йулса пырат. МТСтанцин 51 трактор йусамла пулнă. Йанварĕн 16-мĕш тĕлне 3 трактор çеç йусаса çитернĕ. Плугсем йусамали плана 18 процент кăна пурнăçланă. Йусама панă тракторсемпе плугсен тирпейлĕ упрамаççĕ. Тракторсем йур ăшĕнче лараççĕ.

Чылай колхозсем производствăлă плансем туман. Сăмахран, Хăймалакасси, Ишек, Ишлей, Тивĕш колхозĕсем халĕ те производствăлă плансене тума тытăнман. Райçĕрĕç пайĕпе МТС агрономĕсем ку ĕçре колхозсене сахал пулăшаççĕ.

Районри организацисем йединоличниксем хушшинче пачах çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Çуракине хатĕрленес ыйту тавра колхозсенче те, йединоличниксем хушшинче те социалисăмла ăмăрту пуçарман. Ăмăртава сарас тĕлĕшпе райĕçтăвком нимĕн те тумаст. Çавăн пекех районри хаçат та çак ыйтусем тăрăх уйрăм йалсоветсем, колхозсем, бригадăсем мĕнле ĕçлесе пыни çинчен кирлĕ таран çутатмаст.

Ишлей райĕçтăвкомĕн çуракине хатĕрленес ĕçе çине тăрсах тытăнас пулат. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ 1938 ç. йанварĕн 5-мĕшĕнче йышăннă постановленине бољшевикла пурнăça кĕртсе пырасси—пайанхи ответлă ĕç.

Т. Пронин.

Колхозниксем çĕнĕ пӳртсем лартаççĕ

Муркарти (Куславкка р.) „Çĕнтеру“ колхоз колхозникĕсем 1937 çулта пысăк тупăшлă тырпул туса илчĕç.

Колхозниксем пуйан та културăлă пурнăçпа пурнаççĕ. Вĕсем халĕ çĕнĕ, пысăк та çутă пӳртсем лартаççĕ, кăçал тăватă колхозник çĕнĕ пӳрт лартма тытăнчĕç.

М. Полељников

Вирлĕ кĕрешӳ çук

Аслă Чакри „Прогресс“ колхоз (Трак р-нĕ) 1937 çулта вăйлă тырпул туса илнипе лăпланса ларнă. Кăçалхи çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Йалхуçалăх машинисене ăçта килнĕ унта выртараççĕ. Акмали вăрлăхсене суртламан. Тислĕк, торф тата тĕрлĕрен удобренисем хатĕрлессипе те ĕçлемеççĕ.

Д. Бељайев.

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çитес çуракине хатĕрленесси начар пыни çинчен тĕплĕн кăтартса пачĕ. Çавах та Ишлей районĕнчи „Правда“, Потемкин йачĕпе тăракан тата ытти колхозсем çакăнтан тивĕçлĕ урок тумарĕç. Ку колхозсем пайан кунччен те çуракине хатĕрленессипе вырăнтан та хускалман.

Н. Василйев.

Ишлей районĕнчи Тивĕш йалсоветне кĕрекен колхозсем хăйсем çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухнă.

Ворошилов йачĕпе тăракан колхоз пайанхи куна 270 лав тислĕк, 372 лав торф уйа кăларнисĕр пуçне нимĕн те туман.

Çуракинче ыраш калчи çине клевер акса хăвармала пулсан, клевер вăрри пĕр килограм та çук.

Çавнашкалах „Тивĕш“ колхозĕ те, вăрлăхсен пахалăхне тĕрĕслес, суртсăр вăрлăхсене улăштарас, йалхуçалăх машинисене, лаша кӳлмели таврашсене йусас, çĕре çемçетмели тĕрлĕрен имçамсене хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Пайанхи куна торф, тислĕк пĕр лав та уйа кăларман. Колхоз председателĕ Н. Краснов çак çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те тумаст.

И. Волков, И. Матвейев.

Çĕрпӳ районĕнчи Вăрманкасси йалсоветне кĕрекен „Красный пахарь“, „Майăн 1-мĕшĕ“ колхоз правленисем ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „1938 çулхи çуракине хатĕрленесси çинчен“ йышăннă постановленине пурнăçа кĕртмеççĕ. Йалуçалăх машинисене йусаман, çĕре çемçетмелисене пухассипе те нимĕн те тумаççĕ.

Н. Борисов, П. Клементйев.

Вăрмар районĕнчи Урнар йалсоветне кĕрекен „Победитель“, „Труд“ колхозсенче пайан кунччченех вăрлăхсене суртламан, çĕре çемçетмелисене хатĕрлемен, йалхуçалăх машинисене йусама тытăнман. Лашасене начар пăхаççĕ. Кӳлмели таврашсем çĕмрĕк. Йур пĕр гектар çинче те тытман.

Ванин.

Трийерсемпе туллин усă курмаççĕ

Шупашкар районĕнчи колхозник-ударниксемпе стахановецсен тата опытниксен сљоччĕ йанвар уйăхĕнче пур колхозсем те тата уйрăм хуçалăхсем те çитес çуракине хатĕрленсе çитмеле, тесе йышăнса хăварнă. Сљот пулса иртнĕренпе вăхăт сахал мар иртрĕ ĕнтĕ. Анчах районра çуракине хатĕрленес ĕçре нимĕнле улшăну та палăрмаст. Районри çĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем колхозсене йертсе пымаççĕ.

План тăрăх районĕпе 8 пин гектар çинче йур тытмала пулнă пулсан, йанварĕн 19-мĕшне 600 гектар ытларах çеç тытнă. Торф 100 пин лав кăларса туртармала — 1650 лав кăна кăларнă. Фекали 8 пин лавран—368 лав, тислĕк 174 пин лавран 35560 лав çеç кăларнă. 87 колхозăн 4695 центнер суртлă вăрлăх улăштармала, пайанхи куна 3 колхоз кăна улăштарнă. Районра вăрлăх суртласси те чăтма çук кайа йулса пырат.

Клычевă йалсоветне кĕрекен „Чембек“, „Шăнкас“, „Самолет“ колхозсем вăрлăх фончĕсене çителĕклĕ таран уйăрса хунă пулсан та, пайанхи куна çитсе пĕр йĕрчĕ те суртламан. Суртлă вăрлăхпа улăштарман. Вырăнти удобренисене пухасси те хăй тĕллĕн пуласса шанса лараççĕ. Йалхуçалăх машинисем кĕркунне ĕç пĕтсен мĕнле лартнă, халь те çаплипех тутăхса лараççĕ.

„Шăнкас“ колхоз председателĕ Василйев плугсене тимĕрç лаççи патне турттарса тăктарнă та, халĕ йур айĕнче выртаççĕ. Кунта иртнĕ çулхи тупăша та ĕçкунĕсем тăрăх валеçме тытăнман. Ĕçкунĕсене тĕрĕс шута илсе пыман, нумай çухатса пĕтернĕ.

Çак асăннă колхозсенче вăрлăхсене суртлама трийер çук. Трийер ăçтан кӳрсе килесси те паллă мар-ха.

Апаш участокĕнче вăрлăх суртласа çӳрекен обоз организациленĕ. Обоза йертсе пыма шанчăксăр çынна—Федорова çирĕплетнĕ. Вăл вăрлăха суртлас ĕçре чăрмантарса çеç пырат. Сурхури тĕлĕнче икĕ трийера 8 кун хушши ĕçлеттермесĕр лартнă.

Çавнашкалах Кивçурткассинчи „11 лет Октября“, „Кормилец“, Буденный йачĕпе тăракан, „Труд“, Илпеш, Мошкасси колхозĕсенче те çуракине хатĕрленессипе нимĕн те туман.

Н. М.

ССР СОЙУЗĔН 1-МĔШ СОЗЫВРИ АСЛĂ СОВЕЧĔН ПĔРРЕМĔШ СЕÇÇИЙĔ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Чăваш АСС Республикинчен суйланнă ССР Сойуз Аслă Совечĕн депутачĕсем Сойуз Совечĕпе Национаљнăçсен Совечĕн пĕрлехи ларувĕ пуçланас умĕн. Сулахайран сылтăмала—ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Л. С. Спасов, Улатăрти паровозсем йусакан заводăн токарнăй цехри маçтăрĕ Т. А. Моисейева, „Крестьянская газета“ колхоз председателĕ А. М. Краснов, Чăваш АССР Республик Тĕпĕçтăвком председателĕ А. Андрейева.

Ф. Кислов фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

КОЛХОЗСЕНЧЕ

ВĂРМАР. Тупахри „Тукас“ колхоз çĕнĕ вите туса пĕтерчĕ. Витене 300 сурăха йахăн вырнаçтарнă. Витере çутă, сывлăш усă. Фермăра ĕçлекен колхозниксем выљăхсене тарăшса пăхаççĕ.

И. Х.

Тивĕшри (Ишлей р.) „Тивĕш“ колхоз çамрăкĕсем йал варринчи пысăк пĕве çине каток турĕç. Каток пĕре те пушă тăмаст. Çамрăксем хаваслансах йарăнаççĕ.

Петров.

Шăплат йалсовечĕ (Вăрмар р.) çумĕнче нумай та пулмаст вулав сурчĕ уçрĕç. Халь унта 150 кĕнеке анчах-ха, тата биллиард, домино, шашкă вăйăйисем пур. Колхозниксем вулав çуртне час-часах пыраççĕ. Вулав çурчĕ пуçарса пынипе, кăçал йалти çамрăксем виçĕ пйеса лартса пачĕç.

А. Казаков.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре коммуниссем малти ретре пулмала

Шăмăршă районĕнчи коммуниссен пухăвĕ йалхуçалăх ĕçĕн 1937 çулхи итогĕсемпе 1938 ç. çуракине хатĕрленесси çинчен сӳтсе-йавса çапла каларĕ:

Иртнĕ 1937 çул социалисăмла ăмăртăва анлăн сарса Шăмăршă районĕнчи колхозсем тырпул тухăçлăхне ӳстерессине пысăк çитĕнӳсем турĕç. Кашни гектартанах вăтам шутпа 110-шар пăтран кайа мар тĕштырă туса илчĕç. Тырпул тухăçне çулран çул ӳстерсе пырас ĕçре партин колхозсенчи пуçламĕш организацисем йертсе пынă, вĕсен ĕçĕ çулран çул вăйланса тĕреклене пынă.

Акă „Трактор“ колхоз çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци колхозниксем хушшинче политикăла агитаци ĕçне анлăн сарса ĕçленĕ, колхозниксене агротехникăна вĕрентнĕ, социалисăмла ăмăртăва организациленĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ „Трактор“ колхозра кашни гектартанах 108-шар пăт тĕштырă туса илнĕ. Çавăн пекех тата „Красный вазал“ колхозра та кашни гектартанах 143 пăт сĕлĕ туса илнĕ; Космовский йачĕпе тăракан колхозри коммуниссем те хăйсем тавра колхозниксене организацилесе ĕçлерĕç. Пысăк çитĕнӳсем турĕç. Çак Космовский йачĕпе тăракан колхозăн çĕрне йаланах:—начар çĕр, унта тырă пулмаст,—тенĕ. Коммуниссемпе парттăр колхозниксем унтан хăраман.—Епĕр çав çĕр çинченех вăйлă тырпул туса илетпĕр,—тенĕ. Каланă та, ĕçре те тунă. Вĕсем чи малтанах агрономсемпе канашланă, агрономсем хушшине туса пынă. Тислĕк тăкнă, йур тытнă, вăхăтра тата суртлă вăрлăхпа акнă. Çапла ĕçленĕ çĕр çинчен Космовский йачĕпе тăракан колхозри колхозниксем кашни гектартанах 143 пăт тулă туса илнĕ. Хаљ кунти колхозниксем савăнаççĕ, хăйсен колхозĕнчи коммуниссемпе пĕрле алла-аллăн тытăнса, кăçал, 1938 çулта, татах та вăйлă тырпул туса илессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Кăçал епĕр сталинла вăйлă тырпул туса илетпĕр, теççĕ вĕсем.

Районри коммуниссем умĕнче халљхи вăхăтра тăракан тĕп задачă вăл,—тет пуху, — халăх хушшинче политикăла агитацийе пĕтĕм тимлĕхпе вăйлăн организацилесе йарса, çуракине пур йенчен те лайăх, кăтартулăн иртерме организацилесси пулса тăрат. Ку пысăк та кирлĕ ĕçе колхозниксем хушшинче социалисăмла ăмăртăва анлăн сарса йанипурлă туса пымала.

Пухура тухса каласакансем пурте халљхи вăхăтра халăх хушшинче политикăла агитацие тивĕçлипе организацилемени çинчен калаççĕ. ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас умĕн йалсенче ĕçленĕ агитаторсенчен нумайĕшĕ халь ĕçлеме пăрахнă.

Халљхи вăхăтра, акă ПСК(б)П Тĕпкомĕпе ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çуракине хатĕрленес ĕç çинчен йышăннă постановленине районри пĕтĕм халăха ăнлантарса çуракине бољшевикла иртерме организацилемеле. Кашни коммунис çуракине хатĕрленес ĕçре хăй тавра ĕçхалăх массине йавăçтарса ĕçлесе пымала. Коммунис ĕçре пример кăтартса, социалисăмла ăмăртăва пуçарса, ăна анлăн сарса йарса, хăй хыççăн ĕçхалăх массине йертсе пымала.

Анчах районра çуракине хатĕрленес ĕçне ĕç начар тăрат-ха. Пайанхи куна çитсе те 13 колхозра кăна кирлĕ вăрлăхсене хывнă. „Красная Нива“, „Пулташ“, „Светлый путь“, „Пламя труда“, „Динамо“, „Искра“ тата Чапайев йачĕпе тăракан колхозсенче халĕ те пулсан тырăсене çапса пĕтермен. Плугсене, сейалкăсене, çуракинче кирлĕ ытти ĕçхатĕрĕсене ремонтлассине те калама çук начар организациленĕ. Районра çуракине пур йенчен те хатĕр колхоз çук.

Тӳрех калас пулат, районри хăшпĕр коммуниссем çуракине хатĕрленес ĕçри пысăк ответлăха туймаççĕ-ха. Акă райçĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ Сидоров йулташ хăйĕн ĕçне йуратмасăр ĕçлет. Йаланах вăл:—мана райĕçтăвкомпа парти райкомĕ ĕçре пулăшмаççĕ,—теме йуратат. Çак сăмахпа вăл, Сидоров йулташ, йаланах витĕнсе тăма тăрăшат. Хăй ĕç çине сӳрĕккĕн пăхнине, чĕререн тăрăшса ĕçлеменнине пытарса, витсе хăварасшăн. Тĕрĕслĕх тӳррипе калама ыйтат. Сидоров йулташ пирки çакна каламала: вăл чăнах та райçĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ пулса пĕлтĕрхи йиуљтен пуçласа кăна ĕçлетха. Унăн ĕçри опычĕ те çителĕксĕр, ăна пулăшмалах ĕнтĕ. Çавна кура парти райкомĕ ăна кулленхи ĕçре йаланах пулăшса пырат. Анчах Сидоров йулташ парти райкомĕ кăтартусем панине йуратсах каймаст. Йаланах тенĕ пек тавлашува кĕрсе кайма пăхат. Ку ĕнтĕ Сидоров йулташăн тĕп ситменлĕхĕ. Унăн дисциплинă тĕлĕшпе ĕçĕ уксахланине кăтартат. Вăл малашне те çаплах сӳрĕккĕн ĕçлесе пырсан çуракине ăнăçлăн иртерме пултараймĕ. Сидоров йулташăн халех çав çитменлĕхсене пĕтерсе, бољшевикла хастарлăхпа ĕçе хĕрӳлĕн тытăнмала.

Сутуилӳ организацисем çуракине хатĕрленнĕ çĕрте кирлĕ таварсем кӳрессипе начар ĕçлесе пынине палăртмала. Акă тĕслĕхрен: халь, çуракине хатĕрленнĕ май, лашасене кӳлмели хатĕрсене—хăмăт, йĕнерчĕк, тилхепе кашни колхозрах çителĕклĕ таран хатĕрлесе хумала, илесчĕ—кооперативра çук. Шăмăршă районĕнчи кооператив лавкисене çак таварсене çителĕклĕ таран кӳме тăрăшмаççĕ. Çавăн пекех кулленхи кирлĕ ытти таварсене те начар кӳреççĕ, кооперацинче ĕçлекенсем вăйĕн-шайĕн ĕçлени курăнат. Хуçасăрлăх пиркийех ĕнтĕ Пашйелĕнчи йалпо хăйĕн ĕçне пĕтерсе лартрĕ. Ку йалпо лавкинче таварсем çукпа пĕрех. Халăх тавар илесшĕн, анчах Пашйел лавкинче тавар çук, ăна растратчиксем, тăшманла елементсем тустарнă. Малашне ку йĕркесĕрлĕхе пĕр кун та чăтса тăмала мар. Районри парти организацийĕ, кашни коммунис кооператив ĕçне лайăхлатса йарса, халăха кирлĕ таварсем сутмала тăвассишĕн ĕçлемеле. Кĕске вăхăтрах, çине тăрса тумала ку ĕçе.

Вулав çурчĕсем, агротехникăна вĕренмели кружоксем çуракине хатĕрленес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсен урлă колхозниксене агротехникăна вĕрентсе пымала. Çапла пулин те, районри пĕр вулав çурчĕ те хăйĕн ĕçне кирлĕ пек йĕркелемен. Агротехникăна вĕренес ĕç вырăнтан тапранман тесен те ытлашши пулмаст.

Акă тата стена хаçачĕсем. Çуракине хатĕрленес ĕçре вырăнти стена хаçачĕсем калама çук пысăк агитацилĕ-пропагандăлă-организацилĕ ĕç тума пултарни çинчен каласа тăма та кирлĕ мар, лайăх стена хаçачĕ ĕçре пысăк пулăшу пани çинчен пурте пĕлеççĕ. Анчах, çапла пулсан та, хăшпĕр коммуниссем халĕ те пулсан стена хаçачĕ кăларас ĕç çине сӳрĕккĕн, обывател пек пăхаççĕ. Çавăн пек „пысăк та чаплă çынсем“ шухăшĕпе стена хаçатне кăларасси вăл—ачасен ĕçĕ, а вĕсем, вата çынсем, хаçатпа интересленмеле мар, хаçат кăлармашкăн вăхăт иртермеле мар. Çавăнпах ĕнтĕ районри нумай пуçламĕш организацисенче стена хаçачĕсем кăларасси çине çавăрăнса та пăхмаççĕ. Акă Чапайев йачĕпе тăракан колхозри партин пуçламĕш организацинчи коммуниссем стена хаçачĕ кăларасси çинчен маннă. Çавăн пекех ĕç тăрат „Трактор“, „Красная Нива“, „Пулташ“ т. ыт. колхозсенче те.

Кĕскен каласан, Шăмăршă районĕнче стена хаçачĕ кăларас ĕç манăçа йула пуçланă. Хăшпĕр коммуниссем стена хаçатне кăларасси çинчен асăнмаççĕ те. Бољшевикла пичете, стена хаçатне çапла хакламасăр тăни вăл—пирĕн коммуниссен партин ĕçĕпе вырнаçма пултараймаст.

Колхозсенче кăна мар, районри организацисенче те стена хаçачĕсем тухмаççĕ. Акă райĕçтăвкомра та пулсан стена хаçачĕ тухмаст... Райĕçтăвкомăн хăшпĕр пайĕсенче ĕç дисциплинине пăсакансем, йĕркесĕр, йурăхсăр ĕçлесе пыракансем пур. Мĕншĕн-ха стена хаçачĕ кăларса çавăн пек йĕркесĕрлĕхсем çинчен хаçатра çутатса, йĕркесĕрлĕхсемпе пĕр килĕшмесĕр хаяррăн кĕрешсе пымала мар? Мĕншĕн лайăх ĕçлекен работниксем çинчен, вĕсен ĕçĕнчи лайăх опытсем çинчен стена хаçатĕнче çырмала мар? Райĕçтăвкем çумĕнчи стена хаçачĕ тухмалах, вăл стена хаçачĕ колхозсенче тухакан стена хаçачĕсене пример кăтартса пымала.

Пулашкинчен, пухура постановлени йышăннă чух туха каласнă хăшпĕр коммуниссем пирки те асăнмасăр иртсе кайма май çук. Мĕншĕн тесен, тухса каласакан хăшпĕр йулташсем, пуриншĕн те паллă ыйтупа; нимĕн чухлĕ те тавлашса тăма кирлă мар ыйтупа, сăмах хускатса пăчĕç:—„Çуракине хатĕрленес ĕçре кам йертсе пымала—парти райкомĕ-и, йе райçĕрĕç пайĕ-и?“ Çак ыйтупа калаçса пухура чылай вăхăт иртерчĕç. Тĕлĕнмеле... Ку калаçупа вăхăта нумай иртермеле марччĕ. Мĕншĕн тесен, пирĕн ПСК(б)Партийĕ социалисăм строителствин пур участкисене те унта ĕçлекен коммуниссем урлă йертсе пырат. Кам пĕлмест-ши ĕнтĕ ăна? Колхозра, йалсоветĕнче, райçĕрĕçпайĕнче ĕçлекен кашни коммунисах çуракине хатĕрленес пирки парти райкомĕ умĕнче ответ тытат. Паллах ĕнтĕ, çуракине хатĕрленес ĕçрен парти райкомĕ айкине тăрса йулмаст, вăл кулленхи ĕçре кăтартусем парса, коммуниссем урлă йертсе пырат.

Хăшпĕр коммуниссем хăйсем ĕçлекен колхозри, йалсоветĕнчи, учрежденисенчи ĕçшĕн ответлăха туймаççĕ. Йаланах, пур ыйтупа та, парти райкомĕ кăна ответлă тесе шухăшлаççĕ пулмала. Çавăн пек шухăшлани тĕпĕ-йĕрĕпех тĕрĕс мар. Кашни коммунисах ПСК(б)П умĕнче хăйне шанса панă ĕçшĕн ответлă. Çавна манмала мар.

Коммуниссен районри пухăвĕ хăйĕн решенийĕсенче ПСК(б) Парти Тĕпкомĕпе ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çуракине хатĕрленесси çинчен йышăннă постановленине районри колхозниксем хушшинче сӳтсе йавмала, социалисăмла ăмăртăва анлăн сарса йарса, çуракине пур тĕлĕшпе те тивĕçлĕн хатĕрленсе тăрса лайăх иртерсе, кăçал вăйлă тырпул туса илмеле терĕ. Вăйлă тырпулăшăн кĕрешес ĕçре коммуниссем малти ретре пулмала.

Н. Косойкин.

Трак районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем Канаш—Шупашкар чукунçул строителствинче ĕçлени çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Трак районĕнчи колхозниксем Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б) Парти Обкомĕ чĕнсе каланине хастарлăхпа йышăнса илнине, районти организацисем йертсе пынипе Канаш—Шупашкар чукунçул строителствине организацилĕн тухнине тата хăйсем çине илнĕ обйазателствăна хăвăрттăн пурнăçа кĕртсе пынине палăртса, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнат:

1. Халăх Комиссарĕсен Совечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Йалавне Трак районĕнчи колхозниксене парас.

2. Чукунçул строителствинче ĕçлекен пур колхозниксене тата колхозницăсене Чăваш республик правителстви йачĕпе тав тăвас.

3. Чукунçул строителствинче пысăк активлăхпа тата пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсене премилеме Трак рай ĕçтăвкомне 1500 тенкĕ укçа парас.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ **Л. Спасов**

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕ **Н. Жуков.**

Шупашкар, 1938 çулти йанварĕн 24-мĕш.

Траксем хĕрÿлĕн ĕçлеççĕ

53-мĕш километр. Чукунçула хăвăрттăн туса çитерсе ĕçе кĕртессишĕн пыракан кĕрешÿре халĕхи вăхăтра уйрăмăнах Трак районĕнчи колхозниксем вирлĕн ĕçлеççĕ. Йанварĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа колхозниксем строителствăра ĕçлеме массăлăн тухма пуçларĕç. Малтан тухнă колхозниксем çĕр ĕçне тума карйерсем уçма тытăнчĕç. Виçĕ кун хушшинче 3 пин кубла метр йур тасатрĕç.

ССР Сойуз Аслă Совечĕн пĕррремĕш Сессине кайнă, Чăваш республикинчи ĕççыннисем суйланă депутатсем чĕнсе çырнă телеграммăна илнĕ хыççăн, строителствăра ĕçлесси тата та ытларах вăйланчĕ. Вăл телеграммăна колхозниксем хушшинче сÿтсе-йавма ПСК(б)П райкомĕ кашни колхоза çын йачĕ. Чукунçул тунин пахалăхĕ çинчен тĕплĕн ăнлантарса панă хыççăн, колхозниксем ĕçлеме йышлăн туха пуçларĕç. Строителствăра йанварĕн 16-мĕшĕнче çуранниcем 466 çын, лашалисем 115 çын, 17-мĕшĕнче çураннисем 529 çын, лашалисем 159 çын, 18-мĕшĕнче çураннисем 562 çын, лашалисем 170 çын ĕçлерĕç. Çав колхозниксем 4 кун хушшинче 1660 кубла метр çĕр чавса купаларĕç.

Строителствăра ĕçлекен колхозниксем хушшинче социалисăмла ăмăрту сарăлсах пырат. Çавна май колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ ÿсет, ударлă ĕçлекен бригадăсен, колхозсен йышĕ куçсерен йышлланса пырат. Димитров йачĕпе тăракан колхозран пынă Филиппов, Владимиров бригадисем ĕçе тĕрĕс организацилесе куллен лайăхлатса пыраççĕ. Вĕсем йанварĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа пĕр татăлмасăр куллен 3,5 кубла метр çĕр чавса купалаççĕ. Çĕр ĕçне туса çитериччен строителствăран каймастпăр, теççĕ вăл бригадăсенчи колхозниксем.

Строителствăра пысăк тимлĕхпе ĕçлекен хĕрарăмсемпе ватă колхозниксем те сахал мар. Фекла Николайева, Павлова йулташсем хăйсен паха примерĕсемпе чылай хĕрарăмсене ĕçе йавăçтараççĕ. „Юркин" колхоз правлени председателĕн заместителĕ—65 çула çитнĕ Кирилл Захаров пĕтĕм тимлĕхпе хурса ĕçлет. Вăл колхозниксем хушшинче ĕçе тĕрĕс организацилерĕ. Захаров йулташ ĕçре иртнĕ çулти лайăх опытсемпе уса курат. Иртнĕ çура лайăх ĕçленĕшĕн ăна костумпа премиленĕ.

Ĕçлекенсем хушшинче културăлă-массăлă ĕçе аван йĕркелени те пысăк пулăшу парат. Ку тĕлĕшпе кунта парти райкомĕн виççĕмĕш секретарĕ тата виçĕ ответлă работниксем: Долгов, Петров, Кузнецов йулташсем ĕçлеççĕ. Вĕсем колхозниксем хушшинче куллен тухса тăракан ытусем тăрăх ăнлантарса параççĕ. Каçхине, ĕç хыççăн, колхозниксем хушшинче калаçусем, докладсем ирттереççĕ. Нумай пулмаст район центăрĕнчен килсе „Ирра-тÿ прорывра" пйессăна выљаса пачĕç. Стена хаçачĕ вăхăтра тухса пырат. Хаçат ударлă ĕçлекенсен опычĕсене çутатат, çитменлĕхсене тăрă шыв çине кăларса пырат.

Анчах строителствăри работниксем йĕркелĕ ĕçлеменни пысăк чăрмав кÿрет. Колхозниксен ĕçне тĕрĕс шута илсе пымацни, ĕçлекенсем çине тÿнтерле пăхни, ĕç ытăвĕсене вăхăтра ăнлантарса паманни строителствăри работниксен йăлинчен халĕ те тухман-ха. Кунашкал пулни чукунçул управлени руководителĕсем, партипе профсойуз организацийĕсем айалти работниксемпе, участкăсемпе çыхăнса ĕçлеменнинчен, вĕсене çирĕп йертсе пыманнинчен килет.

ПСК(б)П Трак райком çекретарĕ **Закамский.**

Колхозниксем чукунçул строителствинче

ИШЛЕЙ. Ентимĕркассинчи колхозниксемпе йединоличниксем чукунçул строителствинче тăрăшса ĕçлеççĕ. Çак пилĕк кун хушшинче вĕсем 76 кубла метр тăпра чавса купалавă, 9 кубла метр йур турттарнă.

Çавăн пекех Анаткас Тăрантри колхозниксем те тăрăшса ĕçлеççĕ. 20 колхозник 25 кубла метр тăпра чавса купаларĕç. Халĕ тата 9 çын çуран, 4 çын лашапа ĕçлеме кайрĕç

Гер. Шчербаков.

65 çулхи ударник

ÇĔРПỲ. Клим Ворошилов йачĕпе тăракан колхоз членĕ Федоров Константин 65 çула çитнĕ ĕнтĕ. Ватă пулин те вăл ĕçре çамрăксенчен йулмаст. 1937 çулта колхозра мĕн пурĕ 315 ĕçкунĕ тунă. Çав вăхăтрах чукунçул строителствинче 50 кун ĕçленĕ.

—Епĕ чукунçул туса пĕтеричченех ĕçлетĕп. Канашпа Шупашкар хушшинче чукунçул туни пирĕн Чăваш республикишĕн калама çук пысăк савăнăç пулса тăрат. Манăн пĕр ывăлĕ Хĕрлĕ Çарта. Вăл киле епĕр тунă çĕнĕ чукунçулпа таврăнасса шанатăп, тет Федоров.

С. Павлов.

Колхозри драмкружокăн ĕçĕ

КỲКЕÇ. Хыркассинчи „Рыкща" колхоз çумĕнчи çамрăксен драмкружокĕ аван ĕçлет. Вĕсем „Айдар" пйессăна выљама лайăх хатĕрленсе çитрĕç. Çывăхри 5 колхоза кайса спектаклљ лартса пачĕç Йанварĕн 11-мĕшĕнче „Айдар" пйессăна районри културă çурчĕн сцени çинче выљаса пачĕç. Курма 300 çын ытла пухăннă. Вĕсем пурте спектаклăне ырларĕç.

Т. Логинов.

Стахановла уйăхлăх ирттеретпĕр

ЙĔПРЕÇ. Инвалидсен ертелĕ 1937 çулхи плана ытлашшипех тултарчĕ. Ертелĕн план тăрăх 127 пин тенкĕлĕх продукци туса кăлармалла пулнă, 246 пин тенкĕлĕх туса кăларнă Ертел çумĕнчи квас сутмалли ларйокпа кăлбасси тăвакан цех та пысăк тупăш пачĕç.

„Помощь" ертел Пăрачкаври инвалидсен ертелĕпе ăмăртса ĕçлет.

Стахновецсем пысăк тĕслĕхсем кăтартса пыраççĕ. Уйрăмăнах, К. Герасимов, Луконина, Стољаров тата Йакимов йулташсем лайăх ĕçлеме пуçларĕç.

Ертелĕн рабочисене валљи хватерсем çителĕклĕ. Хватерсенче таса та çутă. Çамрăксем пурăнакан общежитисенче те илемлĕ. Вăхăтла вăхăтра лавăх ирттереççĕ. Рабочисем 1938 çулта татах та тăрăшса ĕçлеме пуçларĕç. Март уйăхне стахановла уйăхлăх туса, 1-мĕш квартал планне срукчен тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Г. Марушев

ЧАПЛĂ ЙУБИЛЕЙ УМĔН

(Красноармейец çырувĕ)

Тата тепĕр уйăхран пирĕн аслă тăван çĕршыв Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнине уйавласа ирттерет. Ку уйав питĕ те чаплă уйав пулат. Ку уйавра пирĕн çĕршыври ĕççыннисем хăйсен паттăр Хĕрлĕ Çарĕпе Хĕрлĕ Флочĕ 20 çул хушшинче утса тухнă мухтавлă çула пăхса тухаççĕ, пĕтĕм тĕнче умĕнче тепĕр хут совет государствин никам çĕнтерейми хăватне кăтартса параççĕ.

Граждăн вăрçин хайар кĕрешÿ кунĕсенчен пуçласа пайанхи куна çитиччченех Хĕрлĕ Çар Аслă Октябĕр револјуцинче çĕнсе илнисене шанчăклăн хуралласа усрат, социалисăм строителствин çирĕп часовойĕ пулса тăрат. Ленин—Сталин партийĕ, пирĕн хаклă çулçуç Сталин йулташ тăрăшнипе вăл вĕрсĕнĕ техникăпа хĕçпăшалланчĕ, тĕнчере чи вăйлă çар пулса тăчĕ. Совет халăхĕ хăйĕн çарне вĕçĕмсĕр йуратса тăрат, унăн йубилейне вăл чи чаплă праçник вырăнне хурса уйавласа ирттерет.

Халљхи вăхăтра çĕршывăн пур кĕтессисенче те Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнине уйавлама хатĕрленес ĕç сарăлса пырат. Уйава уйрăмăнах Хĕрлĕ Çар чаçĕсенче хĕрÿлĕн хатĕрленеççĕ. Красноармейецсем, командирсемпе политработниксем хăйсен уйавне çар ĕç техникине тата политикăна вĕренес ĕçре çĕнĕрен пысăк çитĕнÿсем тупнипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас умĕнхи ăмăртува ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăн, Сталин йачĕпе тăракан кавдивизипе Мускаври Пролетарский Стрелковăй дивизи Хĕрлĕ Çар 20 çул тултарнă йатпа социалисăмлă ăмăрту пуçарса йачĕç. Пайанхи куна ку ăмăртува Хĕрлĕ Çарăн пур чаçĕсем те хутшăннă. Пур çĕрте те хĕрÿ ĕç вĕрет.

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн суйлавĕ красноармейецсен активлăхне нихăçанхинчен ытла ÿстерчĕ. ССР Сойуз Аслă Совечĕн депутатне Оборонă Халăх Комиссарне Совет Сойузĕн маршалне Ворошилов йулташа суйласа йанă хыççăн Белоруççи çар округĕнчи красноармейецсем çар ĕç техникине тата политикăна алла илессишĕн тата пикенерех ĕçлеме тытăнчĕç. Кашни подразделени пĕр-пĕрипе ăмăртат, красноармейецсем, командирсемпе политработниксем уйрăмăн ăмăртува тухнă. Ăмăрту договорĕсене кулленех тĕрĕслесе пыраççĕ, вĕсем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине пĕлтерсе тăраççĕ. Пирĕн подразделени, сăмахран, ăмăртува хутшăннăранпа чылай паллă çитĕнÿсем турĕ. Нумай красноармейецсем „хорошо" тата „отлично" паллăпа вĕренсе пыраççĕ. Отличниксен йышĕ кулленех ÿсет.

— Халĕ манăн „хорошо" отметкăсем пур, çитес вăхăтра пур йенĕпе те „отлично" отметкăсем çеç илме тăрăшатăп, —тет красноармейец Ратченко.

— Манăн çитес вунăкунлăхра пĕр „вăтам" отметкă та пулмаст, пĕтĕмпех „хорошо" тата „отлично" отметкă çеç пулат,—тет Чăваш республикĕнчен килнĕ красноармейец Иванов. Иванов йулташ Хĕрлĕ Çарта 1-мĕш çул пурăнат. Вăл пур йенĕпе те примерлă красноармейец шутланат. Çак уйăхра çеç ăна комсомола илчĕç.

Йубилейе хатĕрленнĕ май, Хĕрлĕ Çар чаçĕсенче харпăрхăй пултарулăх вечерĕсем пулса иртеççĕ, красноармейецсем постановкăсем хатĕрлеççĕ, çĕнĕ йурăсем вĕренеççĕ.

Епĕр пĕлетпĕр, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн 20 çул тултарнă уйавне фабрик-заводсенче те вăйлăн хатĕрленеççĕ. Уйава хатĕрленнĕ май выръансенче оборонă ĕçĕ тĕреклене пырат. Чылай колхозсенче кавалериссен отрйачĕсем организациленĕ, хими кружокĕсем, санитари постисем ĕçлеççĕ. Пур çĕрте те Ворошилов пек тĕл перекенсен йышĕ ÿсет, ПВХО, ГТО значокĕсене илме нормăсем парасси массăлăн сарăлса пырат. Хăйĕн çарне вĕçĕмсĕр йуратса тăракан совет халăхĕ, кирлĕ вăхăтра ăна пулăшма хатĕрленет. Епĕр, алла хĕçпăшал тытса çĕршыва тăшмансенчен хуралакансем, ĕççыннисем пире пулăшма хатĕррине, вĕсем кунсеренех çар ĕç техникине алла илсе пынине лайăх пĕлсе тăратпăр. Колхозсене кашни тухмассеренех епĕр хамăр вăйа, совет халăхĕн вăйне ытларах туйатпăр. Выръансенче оборонă ĕçĕ тĕреклĕнсе пыни çинчен пĕлтерекен кашни çыру пирĕн чĕресене савăнтарат, хамăр ĕçре, вĕренÿре çĕнĕ çĕнтерÿсем тума хавхалантарат.

Красноармейец **К. Сергейев.**

Сырйо çителĕксĕр

ÇĔМĔРЛЕ. 1937 çулхи декабĕрĕн 27-мĕшĕнче Çĕмĕрлери предприйатисенчи стахановецсен канашлăвĕ пулса иртнĕ хыççăн, комбинатри рабочисем тата та пысăк хастарлăхпа ĕçлеме тытăнчĕç. Çĕнĕ çула кĕнĕрен уйрăмăнах авса пукансем тăвакан цехпа стољарнăй тата механически цехсем плана ытлашшипех тултарса ĕçлеме пуçларĕç.

Йанварĕн вунăмĕшĕнче авса пукансем тăвакан цех плана — 153,8 проц., стољарнăй цех—113,3 процент, механический цех—166,9 проц. тултарчĕç. Уйрăм стахановецсем те ĕç тухăçлăхне нихçанхинчен ытла ÿстерчĕç. Акă стољарнăй цехри стахановкă Вера Касйанова куллĕнхи плана йаланах 480-шер процент тултарса ĕçлет. Çавăн пекех В. Гуçков сменăри плана 320 процент, С. Бойков—162 процент, П. Йамбровский—212 процент тултараççĕ.

Анчах та вăхăтра сырйо тăратайманнипе ĕç тухăçлăхĕ хăшпĕр кунсенче чакат. Акă, йанварĕн 13-мĕшĕнче сырйо çителĕксĕррипе авса пукансем тăвакан цех плана 100,1 процент, стољарнăй цех—91 процент çеç тултарчĕç.

Çавăн пекех сырйо çитменнипе уйрăм стахановецсен те ĕç тухăçлăхĕ чакни палăрат. Вера Касйанова малтанхи вăхăтсенче кашни 480-шар процент тултарса ĕçленĕ пулсан, йанварĕн 13-мĕшĕнче 225 процент çеç тултарчĕ. В. Касйанова 225 процента 3 сехет хушшинчех тултарнă, 4 сехет ахаљ тăнă.

Сырйо çителĕксĕррипе пайанхи куна хăма çуракан цехра 9 рамăран 8-шĕ çеç ĕçлеççĕ. Урапасем тăвакан цех çав тери начар ĕçлет.

Комбинат дирекцин материал тăратассипе тимлĕнрех ĕçлемелле.

Й. Мозйаков.

Екскурçи пире нумай пулăшрĕ

Епĕр 1937 ç. октябĕрĕн 1-мĕшĕнче Хусан хулине екскурçине кайрăмăр. Пирĕнпе пĕрле 14 çын пулчĕç. Хусанта Ленин йачĕпе тăракан музейра, библиотекăра тата Киров йулташ вĕреннĕ вырăнта та пултăмăр. Музейра Ленин ăçта, мĕнле вĕренни, рабочисен кружокне мĕнле йертсе пыни çинчен пире ăнлантарса пачĕç. Ленина полицисем арĕслесен: „Влаçа хирĕç ĕçлеме мĕн сана кирлĕ, акă сан умра тĕрме стени" тенĕ. Ленин вĕсене хирĕç „Ку стена нумайах тытăнса тăмаст, йатăнĕ" тесе ответлет. Чăнах та В. И. Ленин йертсе пынипе Октябĕр револјуци капиталиссен влаçне çĕмĕрчĕ. Çапла вара екскурçи пире В. И. Ленин пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен пĕлме нумай пулăшрĕ. Ĕççыннине капиталиссен пусмăрĕнчен хăтарас пирки В. И. Ленин мĕнле ĕçлени пирĕн куç умĕнчех, тесе калаçса параççĕ политвĕренÿ ваљатинче Шупашкарти Хресчен çурчĕн столовăйĕнче ĕçлекен Дмитрийевпа Маљугина йулташсем.

Г. Иванов.

Хаçатсене пăхса тухни

„Тăтăклă улшăну тăвакан" хаçат

Канаш районĕнчи **„Социалисăмшăн"** хаçат çуракине хатĕрленес ыйтусене çутатмаст тесе калама çук. Хаçат кашни номĕртех 1938 ç. çуракине начар хатĕрленнĕшĕн колхозсене хытă вăрçат, „халех тăтăклă улшăну тума" хушат. „Социалисăмшăн" хаçат 1938 çулхи çуракине хатĕрленме, вăйлă тырпулшăн кĕрешме, социалисăмла ăмăртува организацилеме колхозсене акă мĕнле пулăшат. Йанварĕн 1-мĕшĕнче хаçат:

„Кармами йалсоветĕнчи колхозсем çитес болљшевикла çуракине хатĕрленмеççĕ. Вĕсем кăçал, 1937 çулта вăйлă тырпул туса илнипе лăпланса ларнă".

Парти Тĕп Комитечĕпе ССР Сойузĕнчи Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пирĕн хаçатсене çуракине хатĕрленес ĕçе аркатакан айăплă çынсене тăрă шыв çине кăларма хушаççĕ. „Социалисăмшăн" хаçат Кармами йалсоветĕнчи колхозсем çуракине хатĕрленменнишĕн, çак пысăк ĕçе аркатса йанăшăн пĕтĕм айăпа йалсовет членĕ Йевграфов çине йăвантарат. Хаçат вăрлăх хатĕрлес, тасатас, йалхуçалăх машинисене йусас ĕçе аркатса йаракан айăплă çынсене тăрă шыв çине кăлармаст.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе колхозсен, бригадăсен ăмăртуне хаçат мĕнле организацилет? Йанварĕн 3-че „Социалисăмшăн" хаçат ку тĕлĕшпе „Кăтартулă хатĕрленер" йатлă умстатйа çырат. Анчах хаçат умстатйара районти пĕр колхоз, пĕр бригадă çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе социалисăмла ăмăртува тухнине конкретлă кăтартмаст. Ку вăл хаçат колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕç чăннипе мĕнле тăнине тĕплĕн пĕлменни çинчен калат. Çакнашкал вывода çирĕплетекен фактсем:

Йанварĕн 10-мĕшĕнче хаçат **„Çаплах улшăну çук"** йатлă умстатйара Çĕнĕ Шелтемри **„Хĕрлĕ Çăлтăр"** колхоз çуракине хатĕрленнĕ тесе çырат. Çак номĕртех, умстатйана йунашарах **„Хĕрлĕ Çăлтăр" колхоз вăйлă тырпулшăн кĕрешет"** йатлă статйара çапла çырат: „Колхоз ăмăрту договорĕсене çирĕплетмен, çавăн пекех уйрăм бригадăсенче те ăмăрту договорĕсем туман. Вăрлăхсене тасатса, типтерлемен. Тулăпа сĕлĕ вăрлăхне улăштарман."

Хаçат час-часах „тăтăклă улшăну тăват". Йанварĕн 5-мĕшĕнче Сиккассинчи Шмидт йачĕпе тăракан колхоза çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те туманшăн вăрçат. Çапла вăрçнă хыççăн хаçат йанварĕн 10-мĕшĕнче „Вăйлă тырпулшăн кĕрешеççĕ" йатлă заметкă пичетлесе кăларат те, унта Шмидт йачĕпе тăракан колхоза мухтаса хурат. Анчах колхоз халĕ те вăрлăхсене хывса çитермен, тасатман, агрокружоксем ĕçлемеççĕ.

Ку мĕнтен килет-ха? Ку хаçат колхоз активĕпе çыхăну тытманнине, хаçатри материалсене сводкă тăрăх çырнине кăтартат. Колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен хаçатра пичетленĕ материалсен авторĕсем редакци сотрудникĕсем: **С. Степанов, Матвейев, Малов.** Колхоз председателĕсем, бригадирсем, звеноводсем, йалхуçалăхĕнчи стахановецсемпе ударниксем „Социалисăмшăн" хаçат страницинче вырăн тупаймаççĕ. Вăйлă тырпул мастерĕсене хаçатра анлă вырăн памасăр нийепле хаçат та социалисăмла ăмăртува пуçаракан пулма пултараймаст.

Хаçат çуракине хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене тĕплĕн кăтартмаст. Хаçатăн чĕлхи стандартлă.

„Анчах хăшпĕр колхозсенче (Кармами, Уçырма, Йăлмачча, Ахпÿрт) ĕçе тытăнман-та".

Малала тата:

„Майак, Вăтапуç, Çĕнĕ Пĕршенер, Вăрăмпуç колхозсем ĕçе тытăнман та".

Хаçат партипе совет, комсомол организацийĕсем вăйлă тырпулшăн кĕрешес тĕлĕшпе колхозсем, бригадăсем социалисăмла ăмăртува мĕнле организацилени кăтартмаст. Партипе комсомол организацисем, советсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе мĕн тунине хаçатра курма çук. Паллă, районта çуракине хатĕрленесси начар пыни—ку ĕçе партипе совет оргăнĕсем начар йертсе пынинчен килет.

„Правда" хаçат социалисăмла ăмăртун резулљтатне ĕçпе хакламала, ăмăрту мĕнле пынине кăтартакан тĕслĕхсем: йусанă трактор, йусанă плуг, тасатса хунă вăрлăх, агротехникăна тăрăшса вĕрентекен кружок пулмала тесе кăтартса пачĕ. „Социалисăмшăн" хаçат колхозсен ĕçне тунă ĕçе курса мар, тума палăртнă плана курса мухтат.

Хаçатăн вăйлă тырпулшăн колхозсен социалисăмла ăмăртуне чăннипех организацилес пулсан, колхоз активĕпе, колхозри стена хаçачĕсемпе тачă çыхăну тытмала. Унсăрăн хаçат колхозсен ĕçĕсене тĕплĕн пĕлсе тăма пултараймаст. Колхозсен ĕçне тĕплĕн пĕлмесĕр, лайăх ĕçсене кăтартма та, çитменлĕхсене, çуракине хатĕрленес ĕçе аркатса пыракансене палăртса тăрă шыв çине кăларма та май çук.

Матвейев йулташ парторг пулма тивĕçлĕ мар

Парти Шăмăршă райĕçтăвкомĕ çумĕнчи пуçламĕш организацинче 10 коммунис тата 25 сочувствуйущи шутланса тăрат. Организаци пĕчĕккĕ мар. Кунта вăй нумай. Ĕçе лайăх организацилесе йапса тимлĕн ĕçлесе пырсан, çак коммуниссемпе питĕ пысăк ĕç тума пултарасси паллах. Анчах та пуçламĕш организацинчи парторг Матвейев йăш ĕçе тивĕçлĕпе организацилесе йама тăрăшмаст. Коммуниссем хушшинче дисциплинăпа ÿстерсе примерлă ĕçлесе пырас вырăнне, Матвейев йулташ хăй дисциплинăна пăсса пырат. Вăл час-часах ерех ĕçсе хĕрнĕ „вĕри" пуçпа райĕçтăвкома заљатине пынисем те пулнă. Çавăн пек йĕркесĕрлĕхсем тунăшăн ăна, Матвейева, ПСК(б) Парти райкомĕ выговор та панă, райкома чĕнтерсе те ун пек йĕркесĕрленсе çÿремелле марри çинчен асăрхаттарнă, парти пуçламĕш организацийĕ ĕçне лайăхлатмалли пирки кăтартусем те питĕ нумай панă. Анчах, пурĕ пĕрех çак йышăннă мерăсем пулăшмаççĕ. Матвейев йулташ тÿрленмест.

Паллах ĕнтĕ парторг хăй çапла ĕçсе çÿресе дисциплинăна пăсса пырат пулсан, парторганизацинчи ĕç нихăçан та тÿрленсе кирлĕ пек кайма пултараймаст. Ку пуçламĕш организацинче халљхи вăхăтра мĕн куратпăр-ха? Акă мĕн: парторганизацин ĕç планĕ çук, парти пухăвĕ октябĕр уйăхĕнчен вара пĕрре те пулман, политшкул ĕçне начар организациленĕ, коммуниссем хушшинче дисциплинă калама çук начар. Матвейевран курса пулас, хăшпĕр коммуниссем ĕçлеме пăрахса..., ĕçке йерсе кайнă. Акă тĕслĕхшĕн Самойлова илер. Вăл хăй ĕçĕ çине калама çук сÿрĕккĕн пăхат. Çапла начар ĕçленĕшĕн ăна 2—3 уйăх хушшинче икĕ вырăна куçарнă. Çак Самойловах пĕлтĕрхи декабĕр уйăхĕнче ÿсĕрпе парти документне çухатнă. Çапла парти йатне сĕртекен, варалакан тата мăшкăлакан Самойлов пирки пуçламĕш организацин çийĕнчех, кĕске вăхăтра пăхса тухса кирлĕ решени йышăнмала пулнă. Анчах парторг Матвейев йулташ Самойловăн чăтма çук киревсĕр ĕçĕ çинчен пайан кун та пулсан, коммуниссен пухувĕ туса сÿтсе-йавман. Çакăн пек йĕркесĕрлĕхсемпе кĕрешме Матвейевăн алли сĕкленмен, сĕкленме те пултараймаст. Мĕншĕн тесен, вăл хăй те партин çирĕп дисциплинине пăсса пырат, вăл хăй те чиновникла, улпутла-бÿрократла, çĕрĕк шухăшлă çын.

Йанварĕн 11-мĕшĕнче Шăмăршă районĕнчи коммуниссен районри пухувĕ пулса иртрĕ. Пуху кун йĕркинче—1938 çулхи çуракине хатĕрленес ыйту пулчĕ. Анчах çак пухува парторг, вăлах Шăмăршă райĕçтăвком председателĕн заместителĕ—Матвейев йул. пымарĕ.

Матвейев йулташ пек парторг нийепле те ĕçе йĕркелесе йама пултараймаст, ăна кун пек пысăк ĕçе шанса пама йурамаст.

Н. К.

Библиотекăна мĕншĕн хупнă?

ПАТĂРЙЕЛ. Патăрйелĕнчи библиотекăра ĕççыннисене илсе вулама кĕнекесем çителĕксĕр, вырăс классикĕсен кĕнекисем çукпа пĕрех. Хаçат-журналсем сахал çырăнса илет. Райçутĕç пайĕ библиотекă валљи уйăрнă укçа-тенкĕ расхутламаст. Библиотекăран кĕнекесем илсе вулакансен шучĕ кунран кун чакса пычĕ. Библиотекăна хĕле кĕнĕренпе те хутман. Библиотекă пуçлăхĕ Федоров райçутĕç пайĕн пуçлăхĕ Королљковран пулăшу ыйтсан, „пирĕн текущчий счетра укçа çук, тÿсес пулат çанталăк ăшăтиччен" тет. „Мĕскĕн" библиотекă пуçлăхĕ Федоров вара пулăшу çуккине кура библиотекăна хупат.

Иккĕмĕш ерне ĕнтĕ библиотекă хупăнни. Нихăш организаци те библиотекăна ĕçлеттерессипе интересленмест.

Т. Соловйов.

Радио итлеççĕ

УЛАТĂР. Художествăлă гравюрă училищинчи студентсем пушă вăхăта йаланах усăлă ирттерме тăрăшаççĕ. Радио тăрăх Мускавран, Кийевран, Шупашкартан концертсем, йулăшки хыпарсем итлеççĕ Тĕрлĕрен илемлĕ литературă кĕнекисем вулаççĕ, шахмăтла выљаççĕ.

П. Чиганов.

ССР СОЙУЗĔН 1-МĔШ СОЗЫВРИ АСЛĂ СОВЕЧĔН ПĔРРЕМĔШ СЕÇСИЙĔ.

ỲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Аслă Совет Сойуз Совечĕн депутачĕсен ушкăнĕ. Пĕрремĕш рет: Сойуз Совечĕн депутачĕсем—Совет Сойузĕн Геройĕсем (сулахайран сылтăмала) А. Б. Йумашев, И. И. Проскуров, В. С. Холљзунов, Д. Г. Павлов, Йа. В. Смушкевич, В. С. Горанов. Иккĕмĕш рет: Совет Сойузĕн Геройĕ И. И. Копец, Белоруççи Çар Округĕн çар-сывлăш вăйĕсен командуйушчийĕ К. М. Гусев тата Совет Сойузĕн Геройĕсем—М. П. Петров, А. В. Белљаков, С. А. Данилин, С. А. Черных, Н. Ф. Баланов.

Ф. Кислов фото-ỳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Ленин çинчен ӳкернĕ кинофиљмсем

В. И. Ленин вилнĕренпе 14 çул çитнĕ тĕле Сойузкинохроникăн Мускаври студийĕ „Ленин“ йатлă сасллă туллиметражлă документлă фиљм каларнă. Фиљма Владимир Илийч çинчен чылай кино-документсем кĕртнĕ. Ку фиљма пăхакансем Ленина 1918 çулта Майăн 1-мĕшĕнче пулнă демонстрацинче, чирленĕ хыççăн Кремљре, Йелизарова пытарнă çĕрте, Ходынка хирĕнче Хĕрлĕ Çар парачĕ вăхăтĕнче тата ытти çĕрте те курассĕ.

Фиљмра ĕççыннисем Владимир Илийчпа сывпуллашнине тата Хĕрлĕ Площчĕдре Ленина пытарнине ӳкернĕ.

Фиљмăн малали пайĕсем совет халăхĕ Ленин вилнĕ хыççăн унăн ĕçĕсене малала илсе пыракан аслă Сталин йулташ йертсе пынипе тунă социалисăмăн аслăран та аслă çĕнтерӳвĕсене çутатса парассĕ.

„Ленин“ фиљм ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕсене тата ССР Сойуз Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çессин ларувĕсене кăтартнипе вĕçленет.

Сойузкинохроникăн Ленинградри студийĕ В. И. Ленин вилнĕренпе 14 çул çитнĕ тĕле „По ленинским местам“ йатлă кĕскеметражлă фиљм кăларат. Вăл фиљмра Владимир Илийч пурăннă тата ĕçленĕ çуртсене, унăн Смољнăйри пӳлĕмне, Разлив станци çывăхĕнчи шалаша, Октаберти Социалисăмла Аслă револљуци умĕн бољшевиксен партин Тĕп Комитечĕн историлĕ ларувĕ пулса иртнĕ çурта кăтартнă. (ТАСС).

„Çурçĕр полљусĕ“ станцинче

Кусса çӳрекен „Çурçĕр полљусĕ“ станци вырнаçнă пăр йанварĕн 23-мĕшĕнче ирхине çурçĕр широтин 76 градусĕпе 33 минутинче тата хĕвеланăç долготин 13 градусĕпе 35 минутинче пулнă. Станци районĕнче çанталăк уйар. Температурă 15 градус сивĕ.

Норвеги телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Гренландин хĕвелтухăç çыранĕнчи Меккензи бухтинчи Норвеги радиостанцийĕ Папанин ушкăнĕпе пĕрремĕш хут радио урлă тӳрĕ çыхăну тытма пуçланă. Радиостанци кусса çӳрекен совет полљарникĕсемпе вăрăм хумсем çинче çыхăну тытать.

(ТАСС).

„Сталинец“ хаçатăн 100-мĕш номĕрĕ

Колљцовкăри Сталин йачĕпе тăракан (Вăрнар р.) колхозăн хăйĕн пичетленсе тухакан хаçат пур. Колхозри нумай тиражлă „Сталинец“ хаçат 4-мĕш çул тухать ĕнтĕ. Кăçал, йанварĕн 21-мĕшĕнче „Сталинец“ хаçатăн 100-мĕш номĕрĕ тухрĕ.

„Сталинец“ хаçатăн редакторĕ Мишанинпа типографинче ĕçлекен наборщчик Суров йулташсем иккĕшĕ те Колљцовкă колхоз членĕсем.

Колхозниксем хăйсен хаçатне йуратса вуласçĕ. Колхоза çирĕплетес, колхозниксене пуйан та кулљтурлă пурнăç туса парас ĕçре „Сталинец“ хаçат та паллă вырăн та тăрать.

Д. Обофоров.

ТӲРЛЕТНИ

„Чăваш Коммунĕн“ ĕнерхи номĕрĕнче тухнă „В. И. Ленина асăнса“ йатлă информацире (3-мĕш стр.) докладчик йатне тĕрĕс мар кăтартнă. Ăна ПСК(б)П Шупашкар хула комитет секретарĕ Ахазов йул. тесе вуламала.

ТЕМТЕПĔР

Бурши—Мака аулĕнче

Курахски районри Бурши-Мака йалĕнче 140 çула çитнĕ старик Загир Рамазанов пурăнать.

Загир Рамазанов хăй питĕ ватă пулсан та, иртнĕ çулччен суха сухаланă, тулă акнă тата ытти ĕççене те тунă. Рамазанов ĕлĕкхи пурнăçа лайăх астăвать. Вăл час-часах колхозниксене ĕлĕкхи хĕнхурлă пурнăç çинчен, горцăсем хансен пусмăрĕнче мĕнле пурăнни çинчен каласа парать. („Дагестанская правда“).

Пĕр колхозник çемйинче çичĕ учител

Чистай районĕнчи „Ударник“ колхозра 67 çулхи Галима Ахметова колхозницă пурăнать. 1919 çулта унăн упăшкине шуррисем хĕнесе вĕлернĕ. Вăл 13 ачапа йулнă. Ĕлĕкхи самана пулсан çемйи йалтах пĕтмеле. Анчах Ленин—Сталин партийĕпе совет власĕ Ахметована пулăшса пырса, ачисене çитĕнтерчĕ.

Халь Ахметова çемйинче 7 учител.

Унăн хĕрĕ Кариме Октабĕр районĕнче учителте ĕçлет, ывăлĕ Гиљаз—Курманайев вăтам шкулăн директорĕ, Фагиме—Четыредворекри тулли мар вăтам шкул преподавателĕ. Тӳљачевск районĕнче Халима, Гиљалийа тата Сазиде учител пулса ĕçлессĕ.

Ахметован ачисем улттăшĕ вăтам пĕлӳ илнĕ. Пурте заочнă вĕренессĕ. Вĕсенчен пĕри парти членĕ, иккĕшĕ—комсомолец.

(„Красная Татария“).

Кадрсем ӳсессĕ

Нижний Тагилри 143-мĕш номĕрлĕ племсовхозра ĕçлекен дойарка-орденоносец М. В. Кудрина йулташ ĕнесенчен сĕт ытларах суса илес тĕлĕшпе пană обйазателствине лайăх пурнăçланă. Вăл 9 ĕнерен çулталăкра кашни ĕне пуçне 5800-шер литр сĕт суса илнĕ. Хăйĕн обйазателстви тăрăх 5200-шер литр илмеле пулнă. „Костья“ йатлă ĕнерен Матрена Васийлевна 8.400 литр сĕт суса илнĕ.

(„Марийская правда“).

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Тырă хатĕрлев Чăваш кантурĕ

Шупашкарта йалан ĕçлеме çакнашкал работниксене чĕнет:

1. *Вăрлăх йенĕпе ĕçлеме техноруксем*
2. *Техник-строител*
3. *Бухгалтер-ревизор*
4. *Бухгалтерсем*
5. *Аслă бухгалтерсем* (районсенче ĕçлеме)
6. *Оперативлă учот пуçлăхĕ*
7. *Ĕçсене туса пыракан*
8. *Кадрсемпе ĕçлеме ответлă исполнител*
9. *Машинистка*
10. *Ответлă исполнител*
11. *Картотетчик.*

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх. Çак адрĕспе пымала: Калинин урамĕ, 83. Чăвашзаготзерно. А. К. Стиценко йулташ патне.

Пысăк квалификацийĕ работниксем валљи хватер пур.

3—2

Ĕç инваличĕсене пĕлсе тăма

Ĕç инваличĕсене пенçи парас тĕлĕшпе пуçарнă ĕççене (зайавленисемпе документсене) Чăваш АССР Социаллă обеспечени Халăх Комиссариатĕнчен пенçионерсем пурăннă тăрăх районсенчи ĕçтăвакан комитетсене йанă. Çавăнпа та малала пенçи пирки тухакан ыйтусемпе райĕçтăвкомсем çумĕнчи Социаллă обеспечени уйрăмĕсене каймала.

Шупашкарта, Улатăрта тата Çĕмĕрлере пенçи ыйтăвĕсемпе хула совечĕсем çумĕнчи социаллă обеспечени уйрăмĕсене каймала.

Чăваш АССР Социаллă обеспечени Халăх Комиссариачĕ.

3—2.

Акăдеми театрĕнче

Йанварĕн 26-мĕшĕнче

Чăвашла спектакљ

Б. ЛАВРЕНЕВ

„РАЗЛОМ“

4 пайлă

С. С. Мартагин лартать. Художник Йе. Н. Сапожников. Балетмейстер М. Д. Йаницкайа.

Талон №-94. Абонемент №-2 талон №-11

Витаминоль

ВИТАМИН „Д“

Я ПРИНИМАЛ „ВИТАМИНОЛЬ“

Лучшее средство против РАХИТА

„Д“ ВИТАМИН препарачĕн кашни çерине ССРС Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссариачĕн витамин станцинче биологиле тĕрĕслӳ витĕр каларăçсĕ.

Чăвашаптекоуправленин „Сангигиена“ магазинĕсемпе аптекĕсенче пуринче те „Д“ ВИТАМИН ыйтăр.

Куславккари йăвăç комбинатне

Йуристконсулљт кирлĕ

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх, хватер пур. Адрес: Куславкка, ЧАССР., Комбинат.

Колхозсен, колхозниксен тата йединоличниксен 1938 çулта государствăна аш-какай парас тĕлĕшпе мĕн пĕлмеле

Государствăна 1938 çулта кашни колхоз мĕн чухлĕ аш-какай памалине колхозра 1937 çулти октаберĕн 1-мĕш тĕлне майракалă шултра выљăх, сурăхсем, качакасем, тата сыснасем, вĕсем миçе çултипе уйăхрине пăхмасăр, миçе пуç пулнине пурне те шута илсе 1937 çулхи нормăсем тăрăх шутласа кăларассĕ.

Колхозсем государствăна обйазателљнă йĕркепе мĕн чухлĕ аш-какай тăратмалине шутласа кăларнă чухне çаксене шута илмессĕ:

а) колхозри выљăх-чĕрлĕх таварлă фермисен обйазателљствăна алла панă вăхăтчен ăратлă выљăхсен государствă кĕнеки çине сырса хунă майракалă шултра выљăхĕсем, сыснисем, сурăхĕсем тата качакисем, çавăн пекех тата ăратлă выљăхсен государствă кĕнеки çине сырса хунă сурăхсемпе майракалă шултра выљăхсем, государствă кĕнеки çине сырнă хыççăн суралнă самрăк выљăхсем;

б) кӳлсе ĕçлекен вăкăрсем;

в) меринос, каракуљ тата смушкă паракан сурăхсем.

Асăрхаттарни: Колхоз усракан выљăхсенчен хăшне те пулин обйазателствăна алла панă хыççăн ăратлă выљăхсен государствă кĕнеки çине сырса хурассĕ пулсан, хатĕрлевсен комитечĕн районри уполномоченнăйĕн çавна килĕшӳлĕн аш-какай тăратмали обйазателствăна та пĕчĕклетмеле.

Государствăна обйазателнă йĕркепе аш-какай тăратас ĕçе колхозри пур хуçалăхсене те тата йединоличниксен пур хуçалăхĕсене те, вĕсем пурлăх тĕлĕшĕнчен мĕнле пурăннине тата вăл хуçалăхсенче выљăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк пуррипе суккине шута илмесĕр, хутшăнтарассĕ.

Пулă тытакан тата промысла ертелĕсен, инвалидсен коопераци ертелĕсен членĕсем, вĕсем йалти вырăнсенче пурăнассĕ тата хăйсен йалхуçалăхне пĕрлештермен пулсан, тата йалти вырăнсенче пурăнакан пур кустар-одиночкăсем те государствăна обйазателнă йĕркепе аш-какай тăратас ĕçре хăйсем пурăнакан йалсоветри йединоличник хресчен хуçалăхĕсемпе танашассĕ.

Промысла ертелĕсен, промколхозсен, пулă тытакан колхозсен тата инвалидсен коопераци ертелĕсен членĕсем, вĕсем хăйсен йалхуçалăхне пĕрлештернĕ пулсан, аш-какай тăратас ĕçре колхозри хуçалăхсемпе танашассĕ.

Промысла ертелĕсен, пулă тытакан колхозсен тата инвалидсен коопераци ертелĕсен членĕсем, вĕсем йалти вырăнсенче пурнассĕ тата йалхуçалăх ертелĕн уставĕ тăрăх пĕрлештерме тивĕçлĕ пурлăхсем тытмассĕ пулсан, çавăн пекех тата уйхир участкисем çине тырпул акма задани çук пулсан, вĕсем çине йалхуçалăх налогĕ хуман пулсан, государствăна обйазателнă йĕркепе аш-какай тăратас ĕçе хутшăнмассĕ.

Государствăна обйазателнă йĕркепе аш-какай тăратас ĕçе саксене хутшăнтармассĕ:

а) Сойузлă республикăсен правителствисем хула йеве вырăнсен хисепне кĕртнĕ хуласенче, рабочи посолкăсенче тата ытти вырăнсенче пурăнакансен хуçалăхĕсем, вăл хуçалăхсен уйхир участкисем çине тырпул акма задани çук тата вĕсем çине йалхуçалăх налогĕ хуман пулсан;

б) йалти вырăнсенче тата дачăлă посолкăсенче пурăнакан, обйазателствăна алла панă вăхăтчен кĕрĕшсе йалапах (сезонпа мар) çулталăк ытла ĕçлекен рабочисемпе служащисем çакăн пек условисене шута илсе: колхоз членĕсем—вĕсем хăйсем тата вĕсен çемйин ĕçлеме пултаракан членĕсем колхозра ĕçлемессĕ пулсан йе вĕсем колхозра ăнсăртран кăнă (отпуск вăхăтĕнче, канмали кунсенче т. ыт. те) ĕçлессĕ пулсан; колхозра тăман çынсем—вĕсен уйхир участкисем çине тырпул акма задани çук тата вĕсем çине йалхуçалăх налогĕ хуман пулсан;

в) государствă органĕсенчен пенçи илсе тăракан пенсионерсем, вĕсен тырпул акма задани çук тата вĕсем çине йалхуçалăх налогĕ хуман пулсан;

г) йалти специалиссем—ветеринари тата медицинă работникĕсем, учителсем, агрономсем, зоотехниксем, инженерсем, техниксемпе мелиораторсем, вĕсем йалта миçе çул ĕçленине пăхмасăр, вĕсен тырпул акма задани çук тата вĕсем çине йалхуçалăх налогĕ хуман пулсан;

д) красноармейĕцсен арăмĕсем, вĕсен 7 çула çитеймен ача пур пулсан тата семйере ĕçлеме пултаракан членсем урăх çук пулсан.

Ватăлнă пирки ĕçлеме пултарайман колхозниксемпе йединоличниксен хуçалăхĕсене, çав хуçалăхра пурăнакансенчен çемйере ĕçлеме пултаракан урăх çук пулсан, аш-какай тăратассинчен хăтарассĕ. Çавăн пекех тата ватăлса çул иртнĕ арсынсемпе хĕрарăмсен колхозлă килĕсемпе йединоличник хуçалăхĕсене, вĕсен ывăлĕ Хĕрлĕ Çарта йе Хĕрлĕ Флотра действителнăй çар службинче пурăнать тата çемйере унăн арăмĕ 7 çула çитеймен ачасемпе йулнă пулсан, аш-какай тăратассинчен хăтарассĕ.

Ĕçлеме пултарайманнисен шутне çаксем кĕрессĕ: 1) 60 çула çитнĕ тата унтан иртнĕ колхозниксемпе йединоличниксем, 55 çула çитнĕ йе унтан иртнĕ колхозницăсемпе йединоличницăсем, 16 çула çитеймен ачасем; 2) уйхир ĕçĕсенче тата урăх ĕçсенче хутшăнса ĕçлеме пултарайман чăлахсем; 3) социаллă пулăшу йе социаллă страховани органĕсем инвалиднăçăн 1-мĕшпе 2-мĕш категорине кĕртнĕ вăрçă тата ĕç инваличĕсем.

Ватăлса çул иртнĕ колхозниксемпе йединоличниксен хуçалăхĕсене аш-какай тăратассинчен, килĕрен сырнă кĕнекесем кăтартнипе сырса йалсоветсем тăратнă спискăсем тăрăх, хуçалăхсене аш-какай тăратассинчен хăтарасси çинчен уйрăмăн ходатайствăсем ыйтмасăрах, райĕçтăвком распорйаженийĕпе хăтарассĕ.

Сӳлте асăннине тĕплĕн пăхăнса аш-какай тăратассинчен ватăлса çул иртнĕ колхозниксемпе йединоличниксене хăтарассишĕн тата аш-какай тăратассинчен хăтарнă хуçалăхсене учота илессишĕн ответ тытасси Заготовкăсен Комитечĕн районри уполномоченнăйĕсем çине ӳкет.

Государствăна аш-какай тăратмали обйазателствăна алла панă хыççăн уйăрăлнă хуçалăхсем, çĕнĕ обйазателствă илмессĕ, вĕсене уйăрăлаччен панă обйазателствăна пĕрле пурнăçа кĕртессĕ.

Обйазателствăна алла панă хыççăн колхоза кĕнĕ йединоличниксене вĕсем колхоза члена кĕнĕ квартăлтан пуçласа колхозри хуçалăхсем валљи тунă нормăпа шутласа обйазателствă парассĕ.

Обйазателствăна алла панă хыççăн колхозран кăларнă йе хăйсем тухнă колхозниксен хуçалăхĕсене йединоличник хресчен хуçалăхĕсен çулталăкри нормисем тăрăх шутласа обйазателствă парассĕ.

Çĕнĕрен ăстан та пулин килнĕ колхозниксемпе йединоличниксен хуçалăхĕсене, вĕсем аш-какай тăратма тивĕçлĕ тата вĕсене малтан пурăннă вырăнта обйазателства паман пулсан, вĕсем хăш вăхăтра килнине пăхмасăр пĕтĕм çулталăк нормипе аш-какай тăратмали обйазателствă памала.

Çĕнĕрен ăстан та пулин килнĕ хуçалăхсен, вĕсене малтан пурăннă вырăнта обйазателствă панă пулсан, çав обйазателствăсене пурнăçа кĕртмеле.

Государствăна колхозри выљăх-чĕрлĕх таварлă фермисем панă сысна ашĕн хисепĕнчен çирĕм пиллĕк процентĕ тата ытти выљăхсен ашĕн хисепĕнчен çирĕм процентĕ çав колхозри хуçалăхсем хăйсен обйазателствийĕ пурнăçланă çĕре кĕнĕ тесе шутланать, вăл хисепсене колхоз правленийĕ тивĕçлипе кашни хуçалăха валеçсе парать.

Çак љготăна колхозри хуçалăхсене кашни квартăл пĕтнĕ хыççăн фермăсем квартăлта мĕн чухлĕ аш-какай панине шута илсе парассĕ.

Љгота парассине йĕркелеме колхоз правленийĕ обйазателнă поставкăсен инспекторне колхозри љгота илекен хуçалăхсен спискăне (колхоз правлени ларăвĕн протоколĕнчен сырса илнине) тăратать, вăл спискăра унта сырнă колхозлă хуçалăхсен обйазателствине пурнăçлас çĕре кайакан аш-какай хисепне кăтартмала.

Хăйсен хуçалăхĕнче ĕне йе икĕ çулхи тына пăру ӳстерсе вĕсене государствăн хатĕрлев хакĕпе колхозри таварлă фермăна сутакан колхозниксене, çавăн пекех тата колхоза кĕрсе хăйсен ĕнине йе икĕ çулти тына пăруне государствăн хатĕрлев хакĕпе колхозри таварлă фермăна сутакан йединоличниксене государствăна аш-какай тăратассинчен икĕ çуллăха хăтарассĕ.

Ăратлă выљăхсен государствă кĕнеки çине сырнă выљăхсене усракан колхозниксене, вĕсем çав выљăхран илекен самрăк выљăхсене государствăна сутассĕ пулсан, аш-какай тăратассинчен хăтарассĕ.

Хăйсен пăруне ĕнесĕр колхозниксем валљи сутакан тата контрактацилекен колхозниксемпе йединоличниксене, вĕсем хăйсен пăруне панă хыççăн, государствăна обйазателнă йĕркепе аш-какай тăратмали çулталăкри нормăран 20 проценчĕ чухлĕ скидкă парассĕ.

1937 çулти йанварĕн 1-мĕшĕ иртнĕ хыççăн, ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çирĕплетнĕ плансем тăрăх пĕр республикăри, крайри тата облăçри колхозсенчен тепĕр республикăри, крайри тата облăçри колхозсене пурăнма куçнă переçеленцăсене ССРС Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулти нойаберĕн 17-мĕшĕнче „Йалхуçалăх переçеленипе памали љготăсем çинчен“ йышăннă постановленипе килĕшӳлĕн љготăсем парассĕ (ССРС Саккунĕсен сборникĕ, 1937 ç., 17 №, 352 стр.).

Государствăна обйазателнă йĕркепе аш-какай тăратнă чухне колхозри хуçалăхсем, çавăн пекех йединоличниксен хуçалăхĕсем те пĕрле пама тесе ушкăна пĕрлешме пултарассĕ. Колхоз правленийĕсем колхозри хуçалăхсене çав ушкăнсене органсăр ăшлес ĕçре пулăшса, хута кĕрсе пымала.

Колхозри хуçалăхсене тата йединоличниксен хуçалăхĕсене государствăна обйазателнă йĕркепе аш-какай тăратмали хăйсен обйазателствине кирек йепле выљăх тата кайăк-кĕшĕк те (майракалă шултра выљăх, сурăхсем, качакасем, сыснасем, кроликсем, чăхсем, хурсем, кăвакалсем тата кăркасем) обйазателнă чĕрĕле парса пурнăçлама права парассĕ. Лашасене обйазателствăна пурнăçлас майпа йышăнмассĕ.

Колхозсене те çавăн пекех хăйсен обйазателствине кирек йепле выљăх тата кайăк-кĕшĕк те парса пурнăçлама права парассĕ; анчах сыснасене, кăтартса панă нормăсем тăрăх, ытти выљăхсемпе улăштармасăр памала.

Колхозри хуçалăхсен тата йединоличник хресчен хуçалăхĕсен обйазателствине пурнăçланă чухне, обйазателствăра кăтартнă кашни килограмшăн чĕррĕн туртнин кашни килограмне çакăн пек шута илсе йышăнассĕ:

Салăлă тата сурмасалăлă сыснасем	650 грам
беконлă сыснасем бекон фабрикĕсен зонинче	650 „
беконлă сыснасем бекон фабрикĕсен зонин тулашĕнче	750 „
салăсăр сыснасем (50 килограмран пуçласа малала)	750 „
30—50 килограм туртакан сысна çӳрисемпе подсвинкăсем	1000 „
кроликсем	950 „
чăхсем, кăвакалсем, хурсем, кăркасем	700 „
курдӳклă, çулă ӳт-пӳлĕ сурăхсем	750 „
вăтам ӳт-пӳлинчен мăнтăртарах сурăхсем	900 „
çулă ӳт-пӳлĕ шултра выљăхсем, сурăхсем, качакасем	900 „
Вăтам ӳт-пӳлинчен мăнтăртарах курлтра выљăхсем, сурăхсем, качакасем	950 „
Вăтам ӳт-пӳлĕ шултра выљăхсем, сурăхсем, качакасем	1000 „
Вăтам ӳт-пӳлинчен начартарах шултра выљăхсем, сурăхсем, качакасем	1500 „

Майракалă шултра выљăхсен чĕрĕлле 50 тата ытларах килограм туртакан пăрувĕсене, вĕсем мĕнле ӳт-пӳлине кура, майракалă шултра выљăхсен нормисем тăрăхах шута илсе йышăнассĕ.

Колхозсен обйазателствине пурнăçланă чухне чĕрĕлле туртнин кашни килограмне çакăн пек шута илсе йышăнассĕ:

	Обйазателствăва шултра выљăхпа сурăхсем тăрăх пурнăçланă чухне (грампа)	Обйазателствăна сыснасем парса пурнăçланă чухне (грампа)
Салăлă сыснасем	650	900
Беконлă сыснасем бекон фабрикĕсен зонинче	650	900
Беконлă сыснасем бекон фабрикĕсен зонин тулашĕнче	750	1000
Сурма салăлă сыснасем	650	900
75 тата ытларах килограм туртакан салăсăр сыснасем	750	1000
60—75 килограм туртакан сыснасем	750	1200
Кроликсем	950	—
Чăхсем, кăвакалсем, хурсем, кăркасем	750	—
Çулă ӳт-пӳлĕ курдӳклă сурăхсем	750	—
Вăтам ӳт-пӳлинчен мăнтăртарах курдӳклă сурăхсем	900	—
Çулă ӳт-пӳлĕ шултра выљăхсем, сурăхсем, качакасем	900	—
Вăтам ӳт-пӳлинчен мăнтăртарах шултра выљăхсем, сурăхсем, качакасем	950	—
Вăтам ӳт-пӳлĕ шултра выљăхсем, сурăхсем качакасем	1000	—

Майракалă шултра выљăхсен чĕрĕлле 100 тата ытларах килограм туртакан пăрувĕсене, вĕсем мĕнле ӳт-пӳлине кура, майракалă шултра выљăхсен нормисем тăрăхах шута илсе йышăнассĕ.

Аш-какай тăратнă чухне çаксене йышăнма йурамасть:

а) Чирлĕ тата хытканланса кайнă выљăхсемпе кайăк-кĕшĕксене;

б) Майракалă шултра выљăхсен вăтам ӳт-пӳлинчен начартарах пăрувĕсене;

в) Колхозсенчен—вăтам ӳт-пӳлинчен начартарах майракалă шултра выљăхсене, сурăхсене тата качакасене;

г) Çавăн пекех йышăнма йурамасть.

	Колхозсенчен (выљăх чĕрĕлле çакăнта кăтартнинчен кайарах туртать пулсан)	Колхозниксемпе йединоличниксенчен (выљăх чĕрĕлле çакăнта кăтартнинчен кайарах туртать пулсан)
Майракалă шултра выљăхсене	100 килограм	50 килограм
сыснасене	60 „	30 „
сурăхсене	25 „	20 „
хурсене	3,5 „	3,5 „
каркасене	2,8 „	2,8 „
кроликсене	1,8 „	1,8 „
кăвакалсене	1,4 „	1,4 „
чăхсене	1,0 „	1,0 „

Выљăхсене хатĕрлев пункчĕсене сырса панă чухне выљăхăн чĕрĕлле йывăрĕшĕнчен, выљăхăн хырăм-пыршинче пуррисемшĕн, çакăн чухлĕ кăларса парахассĕ: майракалă шултра выљăхсем, сурăхсем тата кайăк-кĕшĕксем тăрăх—5 процент, сыснасемпе кроликсем тăрăх — 3 процент, йе выљăха паракан килĕшнипе майракалă шултра выљăхсене, сурăхсене, качакасене йышăнмали пунктра 12 сехет хушши выçă тăратнă хыççăн тата сыснасене, кроликсене, кайăк-кĕшĕксене 6 сехет хушши выçă тăратнă хыççăн, выљăх чĕрĕлле мĕн чухлĕ туртнине пĕтĕмпех шута илсе йышăнассĕ.

Колхозсем аш-какай тăратмали обйазателствăн квартăлти нормине пурнăçа кĕртмесен, Заготовкăсен комитечĕн районри уполномоченнăйĕн хăйĕн обйазателствăна мĕншĕн пурнăçа кĕртменнине тĕрĕслемеле, аш-какай тăратас тĕлĕшпе панă обйазателствăсене усал шухăшпа йатарласа срокра пурнăçа кĕртмесĕр тăракан колхозсем пирки, колхоз правленине асăрхаттарса кăтартнă хыççăн 10 кун иртсен, пĕтĕм ĕçе республикă прокурорне йарса парать, вăл вара колхоз çине обйазателствăн пурнăçа кĕмен пайĕ чухлĕ государствă тӳлесе илекен хаксемпе шутласа штраф хума, çавăн пекех тата квартăлти обйазателствăн пурнăçа кĕмен пайне натурăпа шыраса илме колхоз правленине суд урлă ответ тыттарать.

Колхоз хăй пама тивĕçлине судченех парса татать пулсан, суд ĕçне пĕтерсе лартассĕ.

Пама тивĕçлине натурăпа шыраса илес тĕлĕшпе те, çавăн пекех штраф шыраса илес тĕлĕшпе те суд йышăннă решенине обйазателнăй поставкăсем тăрăх ĕçлекен инспектор пурнăçа кĕртет.

Колхозри хуçалăх йе йединоличник хуçалăхĕ аш-какай тăратмали обйазателствăна кăтартнă срокра пурнăçа кĕртмесен, обйазателнăй поставкăсем тăрăх ĕçлекен инспекторăн вăл хуçалăха асăрхаттарса сырнă хут памала, вăл сырура обйазателствăна 10 кунлă срокра пĕтĕмĕшпех пурнăçламасан, ĕçе суд аллине парассине тата, ăна пăхмасăр, обйазателствăн парса татман пайне пĕр тавлашусăр натурăпа шыраса илессине кăтартмала.

Асăрхаттарса сырнă хутра кăтартнă срокра та обйазателствăна пурнăçа кĕртмесен, инспекторăн, Заготовкăсен комитечĕн районри уполномоченнăйне çирĕплеттерсе, ĕçе недоимщик пурăннă вырăнта ăна сӳлте асăннă пек ответ тыттарма суд аллине памала. Çав вăхăтрах инспектор обйазателствăн пурнăçа кĕмен пайне натурăпа шыраса илессине туса иртерет, анчах пĕртен пĕр ĕнене йе—вăл çук пулсан—пĕртен пĕр пăрува илсе кайма йурамасть.

Шыраса илессине Заготовкăсен комитечĕн районри уполномоченнăйĕ сырса панă распорйажени тăрăх туса иртермеле.

Пĕр тавлашусăр йĕркепе выљăха тата кайăк-кĕшĕке илсе кайма тытăнас умĕн, обйазателнăй поставкăсем тăрăх ĕçлекен инспекторăн хуçалăхăн аш-какай тăратассинчи недоимкăна чăннипех те парса татманнине тепĕр хут тĕрĕслемеле, парса татман пулсан вара, выљăха тата кайăк-кĕшĕке илсе кайас ĕçе тытăнмала.

Пĕр тавлашусăр йĕркепе выљăха тата кайăк-кĕшĕке илсе кайас ĕçе хуçалăх пуçлăхĕ йе ун çемйинчи ӳссе çитнĕ членĕ тата икĕ свидетел пулсан кăна туса ирттерме йурать.

Аш-какай тăратмали хăйĕн обйазателствине пурнăçламан колхозник хуçалăхĕнчен йе йединоличник хресчен хуçалăхĕнчен пĕр тавлашусăр йĕркепе выљăх тата кайăк-кĕшĕк илсе кайас ĕçе ирттернĕ чухне, обйазателнăй поставкăсем тăрăх ĕçлекен инспекторăн кăтартса панă формăпа акт çырмала.

Аш-какай тăратмали обйазателствăна пурнăçламаншăн колхозник хуçалăхĕнчен йе йединоличник хресчен хуçалăхĕнчен илнĕ выљăха тата кайăк-кĕшĕке йышăнма тата тивĕçлĕ вырăна çитерсе пама, обйазателнăй поставкăсем тăрăх ĕçлекен инспектор Заготскотăн районри кантурĕн прийомщикне чĕнет, вăл вара выљăхăн ӳт-пӳвĕ мĕнлине палартать тата вăл выљăха йалпора йе Заготскотăн йышăну пунктĕнче турттарса пăхать.

Выљăх—йе кайăк-кĕшĕк илнĕ хуçалăхсене квитанци памала, выљăхшăн йе кайăк-кĕшĕкшĕн государствăн хатĕрлев хакĕсемпе укçа тӳлемеле.

Илнĕ выљăхăн йывăрăшĕ хуçалăхăн аш-какай тăратассинчи недоимкинчен иртсе кайать пулсан, вăл хуçалăха çав ытлашши ашпа мĕн тăвас тенине тума права парассĕ.

Недоимщчик хăй ирĕкĕпе обйазателствăна судченех пурнăçа кĕртсен, суд ĕçне пĕтерсе лартассĕ.

Хуçалăх ун пек тумасан, суд çапла тăвать:

а) хуçалăхра аш-какай тăратас тĕлĕшпе пĕр тавлашусăр шыраса илме май парас чухлĕ выљăх тата кайăк-кĕшĕк пулсан, государствă тӳлесе илекен хаксемпе обйазателствăн пурнăçа кĕмен пайĕ чухлĕ укçан илмели штраф хурать;

б) хуçалăхра аш-какай тăратас тĕлĕшпе пĕр тавлашусăр шыраса илме май парас чухлĕ выљăх тата кайăк-кĕшĕк пулмасан,—государствă тӳлесе илекен хаксемпе обйазателствăн пурнăçа кĕмен пайне виçĕ хут ӳстерсен пулнă хисеп чухлĕ укçан илмели штраф хурать (вара обйазателствăн пурнăçа кĕмен пайĕ парса таталнă шутланать).

Ĕçе йывăрлатакан сăлтавсем пулсан (парас мар тесе пĕр шут обйазателствă тăрăх пĕр тавлашусăр шыраса илнĕ чух хирĕç тăни т. ыт. те), суд, штраф хунисĕр пуçне, РСФСР Уголовлă кодексин 61-мĕш статйин тата ытти сойузлă республикăсен Уголовлă кодексин çавăн пек статйисен 2-мĕш йе 3-мĕш пайĕпе айăплать.

Аш-какай тăратма тĕрĕс мар йавăçтарни, обйазателнă йĕркепе аш-какай тăратас хисепе тĕрĕс мар туни, çавăн пекех тата аш-какай тăратассинчи недоимкăна витсе хума выљăха тата кайăк-кĕшĕке тĕрĕс мар илни çинчен жалăбăсене—аш-какай паракансем обйазателствăна алла панă кунран йе выљăха тата кайăк-кĕшĕке илнĕ кунран пуçласа пĕр уйăхлă срокра Заготовкăсен комитечĕн районри уполномоченнăйне парассĕ.

Заготовкăсен комитечĕн районри уполномоченнăйсен решенийĕ çинчен жалăбăсене Заготовкăсен комитечĕн райуполномоченнăйĕсен решенине жалăбă паракана пĕлтернĕ кунран пуçласа пĕр уйăхла срокра Заготовкăсен комитечĕн республикри уполномоченнăйне йарса памала.

Заготовкăсен комитечĕн республикри уполномоченнăйĕн решенийĕ татăклă шутланать.

Аш-какай тăратма тĕрĕс мар йавăçтарни, аш-какай тăратмали хисепе тĕрĕс мар туни, çавăн пекех тата обйазателствăна пурнăçламаншăн выљăха тата кайăк-кĕшĕке тĕрĕс мар илни çинчен панă жалăбăсене вĕсем пырса кĕнĕ кунран пуçласа 10 кун хушшинче пăхса тухмала тата решенине жалăбă паракана пĕлтермеле.

Колхозсем, колхозри хуçалăхсем тата йединоличник хресчен хуçалăхĕсем 1938 çулта государствăна аш-какай тăратмали обйазателствăна пурнăçа кĕртнине ĕнентерекен пĕртен пĕр документ, вăл—Заготскотăн йышăну пункчĕ панă квитанци пулса тăрать.

(1938 çулта аш-какай тăратасси çинчен кăларнă инструкциrен).

„Чăваш коммунĕ“ çыранса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 46. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2. Тираж 14.500 53—52 п. л. Т—Т.

Ч